Михаил СУНТАЛ

# ТĔНЧЕ УМĔНЧЕ

Сăвăсем

Шупашкар
2009

ББК К84. 09 (Чув)6-51
УДК 8(471.344)
С 90

Сунтал Михаил.
Тĕнче умĕнче. Сăвăсен пуххи.

Ку кĕнекене автор 2008-мĕш çулта çырнă сăвăсене кĕртнĕ. Çут çанталăк, çын, ватăсене пуç çапни тата пурнăç саманчĕсем хальхи вăхăта сăнласа параççĕ. Сăвăри герой пурнăçĕ пĕр ĕмĕтпе çутă – вăл тĕнче шайлă, турра юрăхлă, хитре те сăпайлă чăваш пулас тесе çунса тăрать. Çавăн çинчен ку сăвă кĕнеки.

М. Сунтал, 2009

# УМСĂМАХ ВЫРĂННЕ

* * *

Шăрçаланать халь пурнăç тексчĕ,
Çапать машинка саспалли.
Кашни сăмах халь пурнăç терчĕ,
Кашни страница сан валли.

Эс пурнăç нушине курманччĕ
Мĕнле тертпе вăл килнине.
Ак çитрĕ те çав терт саманчĕ
Çырма пуçларăм çын чунне.

Çук, тăмран мар вăл çыннăн чунĕ,
Çук, кирпĕч мар пуль саспалли.
Анчах мĕн чухлĕ автор юнĕ.
Юхса пуль кĕнеке тулли.

Тухать халь саспалли, сăмахĕ...
Пуçтарăнать пĕр ăс пуххи.
Мĕнле асам тĕнчен юмахĕ
Ку кĕнеке пек калĕ-ши?

# ХĔРАРĂМ

* * *

Арăм ăрăмларĕ пурнăçа.
Курăнать тĕнче йăлт урăхла.
Эс унпа хăçан пулса хуçа,
Тыткалатăн-и хăвна кăшт арçынла?

Арăм ăрăмларĕ пурнăçа.
Арăм хыççăн кайрăм çавтăнса.
Халĕ пурнăç уйăх пек таса,
Çутатсан та çутатать мана кăна.

Арăм ăрăмларĕ пурнăçа.
Шухăшлатăп: арăм ман ăçта?
Çакă пит асаплă вăхăтра
Манăн арăм яланах çумра.

* * *

Хитре тĕнче пĕр хĕр тавра
Хăй пĕлнĕ пек çеç çаврăнать.
Вăл пĕр кулать те кун пуçлать,
Пĕр хурланать те каç тăвать...
Мĕнле ман çав сар хĕр тавра
Хĕвел пулса çӳресчĕ-ха?
Çумăр çуса, кун пултарса,
Каç тăршшипе тархасласа,
Çак тĕнчере пурнасчĕ-ха.

* * *

Паян хĕрсем тумланнă
Çурхи чечек пекрех.
Пыл хурчĕ те вăраннă,

Вĕçесшĕн çӳлерех.
Çурхи çил кăшт пăлханчăк,
Сирет çеçке питне.
Пыл хурчĕ те мухтанчăк,
Сарать хăй çунатне.
Çӳлти халь сар хĕвел те
Вĕçет чечек тавра.
Кĕтет хĕр халĕ тем пек
Хăйне савакана.

* * *

Пĕр хĕрача куç кĕски евĕрех
Чăлтăр та чăлтăр ялтрарĕ.
Кăкăрĕ ун хĕвел тухнă пекех
Куç умĕнче ташларĕ.
Куç кĕски пек çутă ури
Чăн пурнăçа пытармарĕ.
Парăр мана ун чĕрине,
Эпĕ унран хĕвел ярăп.
Çав хĕвел мар-и куç умĕнче?
Çук, эп шутлап, куç кĕски ку!

* * *

Çу çитрĕ панулми пиçмелĕх.
Сад-пахчисем – чуна уçма!
Çиçĕм пекех куçа çимелĕх
Хĕрсем тухаççĕ урама.
Ак, курăр ĕнтĕ, çĕнĕ утăм
Хăй палăрать турă пекех.
Хĕр пĕвĕ панулми пек тутлă.
Ас тивĕн те – вара, пĕтех!
Çапах та эсĕ пул-ха ырă,
Пырсах ан тĕкĕн хĕр ӳтне.
Хĕвел пекех вĕт питĕ хытă
Вăл пĕçертет, тет, каçхине.

* * *

Нивушлĕ вара чăваш хĕрĕ
Çухатĕ Тур панă сăнне?
Ăшне çĕлен пек шуса кĕчĕ
Çав çылăх тени пĕринче.
Ăна та тыттарчĕç пулать-и
Хĕп-хĕрлĕ ултав панулми?
Ăна çыртса пăхрĕ те манчĕ
Тăван çĕршывне ас илми!
Эй, хĕрĕм, эс аслă та вăйлă
Пуласшăн çак çут тĕнчере.
Анчах Тур мĕн панă тупаймăн
Çĕлен явăнан ют çĕрте.
Тур панă пулсан вăл упрантăр
Эс ӳснĕ таса кил-çуртрах.
Мĕн-ма эс сăнна улăштартăн
Ют çын сăнĕпе самантрах?
Ан пул эсĕ урăх ют евĕр,
Ан тăхăн юхха кĕпине.
Сана валли халăх типтерлĕ
Упранă чăнах хитрине.
Аннӳ пек эс пул-ха сăпайлă,
Ют хыççăн ан кай тепĕр чух.
Вара, тен, калаçĕç: пит стайлă,
Ун пек хĕр ниçта та халь çук!

* * *

Тепĕр чухне чăнах та пур-мĕн
Илем тени çак тĕнчере.
Мĕн ĕмрипе хупса çӳренĕн
Уçса пăхатăп куççене.
Епле илемлĕ хĕрупраçĕ
Чăваш сăмахĕ каласан.
Калаçнăçемĕн, сăн-сăпачĕ

Тен, хитререх те турăшран.
Çапла çын чунĕ усăлать,
Хăй сăмахне каланăçем.

* * *

Ман юрату каллех чупса та çитрĕ
Мĕн яшлăхран юратнă çын патне.
Таçта темле шухăшпала çунсан та
Сан çумăнтах вăл лăпланасшăн тин.
Чăнах та, пăх-ха, ĕмĕр иртрĕ мар-и?
Халь тин пĕр ватăлсан мĕн юратни!
Çапах та чун сисет, килет тепре
Чăн юрату хĕлхемлĕн сан пата.
Çак шухăша пиçме нумай-и вăхăт кирлĕ,
Çунса тухмасăр çуралмасть вĕт чун!
Тен, çавăнпа, шутлатăп: юрату ку!
Çавна шанса пурнатăп çакă кун.

* * *

Хĕрупраç утать пит меллĕн.
Çав утта халь кам курать?
Турă тунă пуль, эс, тейĕн,
Е арçын çавна тăвать?
Утнăçем курать хăйне те,
Уттине кăштах юсать.
Ак, мĕн тетĕр, ун уттийĕ?
Уттинче ман чун вылять!
Арçын чунĕ пуль çав утăм,
Ман чуна вăл кăтартать.
Чун куçса пырать, пыруçăн,
Ун хитре ури тĕпнех!

* * *

Чӳхенет çут кун çути

Хĕрупраçăн питĕнче.
Чӳхенет те тăкăнать-и,
Йăлл! кулсассăн ман çине!
Ман çинех кăшт тăкăнсан,
Эпĕ те йăлл! култăм мар-и?
Эх, аппаçăм, яра пар,
Чĕрине мана та пар!
Хĕрупраçăн çутине
Кун иртсен те манар мар!

* * *

Виççĕн ларчĕç, сăмахлаççĕ,
Тĕнчере мĕн пур-ха, теççĕ.
Пур-мĕн савăк чăн юлташ,
Çавăнпа халь чун хавас.
Ак, тĕл пулчĕç, ыталашрĕç.
Юрату тесе те калăн.
Çук пуль, туслăхĕ кăна –
Ан парсамччĕ никама!
Ах, чун савăкĕ пурах-мĕн.
Хĕр чĕри çырла пекех.
Пĕр пурак эс пуçтаратни,
Ача пек çисе пăхатни?
Çинĕçем, аса килет пек
Сĕтпеле юрса çини.
Ăт, çапла чĕре юрларĕ
Хĕрупраç улахĕнче.

* * *

Пĕр турă килчĕ çĕр çине:
Мĕн-ма мана çеç вăрттăн курчĕ?
Кăшт чуп тусассăн ун питне,
Хитрен кăна пĕр хĕр пек кулчĕ.
Хăй чăн чунне уçса вăл ячĕ,
Тухса та тăчĕ çын умне.

Турӑ пекех-мӗн ун чӑн ячӗ –
Туллин сапать хӑй кӑмӑлне.
Ҫав кӑмӑл ӑшӑ, питӗ ӑшӑ –
Лӑпкарӗ манӑн чӗреме.
Халь тин ӑҫтан-ха пултӑр пушӑ
Ҫак тӗнчере ҫул ҫӳреме?
Ҫав турӑ пуль чӑн ҫул кӑтартрӗ
Утса тухмалӑх тӗнчене.
Тӗнче те вӗт халь урӑхланчӗ –
Ҫутийӗ ӳкрӗ ман ҫине!

* * *

Эп тупрӑм мар-и чунӑма?
Пӗр кӗтесре вӑл лӑп! ларатчӗ...
Куҫпа курсан та тепӗр чух
Ӑна асӑрхаманччĕ...
Тахҫан, темле пӗр шухӑшпа
Пӑхса илсеттӗм те, турамӑш
Унта ларать-мӗн ҫуталса,
Хӑй тӗнчипе пытарӑнса...
Ҫав тӗнчепе хавасланса
Темле ҫул хывӑнчӗ пулать-и?
Ал-урапа сӑх-сӑхланса
Эп ӳкрӗм ун умне тупмалӑх
Хам чунӑма тур умӗнче...
Турамӑшӗ епле хӑватлӑ,
Епле вӑл ӑшӑ хӗвел пек
Пӗрре ҫеҫ пӑхрӗ те пулмалӑх
Вӑй пачӗ ҫакӑ тӗнчере.
Халь эпӗ те ҫуталнӑн пултӑм,
Турамӑш пур ман умӑмра.
Пӗр кӗтесре вӑл лӑп! ларатчӗ, –
Курмарӗ ҫын пуҫ ҫапнине!

* * *

Çутатать тĕнчене хĕр илемĕ,
Йăлл! кулать уйăх евĕр тути...
Унпала халь хĕвел те киленчĕ –
Питĕнче ун хĕвелĕн кĕлти!
Çиç-ха, çиç! Эс çутат хĕвел евĕр,
Е пĕр тĕкĕр пекрех тĕкĕрлен.
Сан çине ӳксе юлнă пин пĕрчĕ
Халĕ те çуталса пĕтеймен...
Савăнтартăр мана çавă çутă
Кантăкран кĕрекен çут пекрех.
Пурăнма халĕ пулчĕ пит тутлă –
Курнăçасчĕ анчах тепĕре!

* * *

Хальхи вăхăтри Нарспи
Ăçта-ши çӳрет ши! те пи!
Çӳл ту çине вăл хăпарать,
Тен, тинĕс тĕпне те анать.
Эй, куртăм ăна, вăл вилмен.
Çул урлă каçать чĕлтĕрти.
Вăл йăрăс, хитре, вăр та вар
Сапать çĕр çине шĕл-кăвар.
Иртет сарă хĕр, çунать пур тĕнче.
Кашни юратасшăн çав сарă хĕре!
Мĕнле-ха апла, вăл кайнăччĕ-çке!
Ăçтан-ха кăварĕ? Çунать ман чĕре!
Нарспиçĕм, Нарспи, эс айăплă-ши,
Сан пурнăç вăл турă çырни!
Тĕнче хăй калать, туртать, пĕтерет...
Нарспи, тет, вăл манăн евит!

* * *

Эп айăплă çав. Уйăп кайăк
Вĕçсе те каять инçете.
Тăрать халь пилеш пит лайăх,
Çырли çилпеле ӳкесле...
Çав хĕрлĕ пилеш пит ытарлă
Çын чунĕ пекех туйăнать.
Юр ӳкнĕ чухне вăл кăварлă
Çав уйăп пекех курăнать.
Ун чух вĕсем пулĕç пĕр майлă,
Хĕп-хĕрлĕ пилеш те ман чун.
Килет пек вĕçсе пĕр кайăк
Тĕнче хитреленнĕ кун.

* * *

Каç пулса килет турпаслăн,
Çил çынна авать.
Каçхине сана кураслăн
Эп клуба каçап...
Чăн та, пур унта яш-кĕрĕм,
Пур тĕнче ăшши.
Çил пекех пырса эп кĕтĕм –
Пултăр чун ташши!
Эп ташларăм, эп юрларăм
Санпала пĕрле.
Халĕ те манса каймарăм
Çавă тĕнчене!

* * *

Тулли мих пек тулли тĕнче
Час çурăлать пуль тенĕччĕ...
Сана курса та киленсе
Çав тĕнчене те кĕнĕччĕ...
Ун чух эсир тыр тултарса...
Эпир ăна тиенĕччĕ!
Эсир пире те астарса

Ытла та хыт шӳтлеттӗрччӗ.
Тулли мих пек тулли тӗнче
Ун чух сап-сарӑ тӑнӑччӗ.
Халь тин каллех аса илсен –
Тухать çав кунӑн чӑнлӑхӗ.
Эх, тусӑм, ху та мих пулсан
Сана та эпӗ йӑтӑттӑм!
Тӗнче каллех туллин кулсан,
Эп çамрӑк пек те кулӑттӑм.

* * *

Хӗвел ӳкет те саланать...
Пӗр пайӑрки çеç юлнӑ!
Çав пайӑрка çутипеле
Ман пӳрт ӑшӑнкаларӗ...
Кӗрет çав çутӑ кантӑкран.
Мӗн пур-ха пулӗ тет.
Ун çутинче те курӑнать
Мӗн пур хӗн-хур та терт.
Хама та куртӑм, акӑ, эп.
Эп мӗн хӗвел пекех...
Ун çутипе çуталнӑçем
Хӗн-хур та иртрӗ пек.
Хӗвел ӳкет те саланать,
Çути пӳрте кӗрет...

* * *

Каçхине эп кунта пулманччӗ,
Хӗрлӗ площадь текен вырӑнта.
Кунта мӗн лампӑсем çунаççӗ,
Ку çула хӗрлӗрех çутатса...
Ку брусчатка мӗне пӗлтерет-ши,
Мӗншӗн хӗрлӗ вӑл, апӑрша?
Эп ун тӑрӑх утма пӗлееп-ши,
Мӗн калать-ши вӑл çак пурнӑçа?

* * *

Тĕл пулу кĕтнĕçем шухăшлатăп:
Куç умне ман тухать пĕр тĕнче.
Ас илсессĕн, пĕрре çех кулатăп,
Ун пекки шăпа çук ку чухне.
Пурнăç хăй парнелет телей сĕмĕ,
Тĕл пулу хĕвел пек курăнать.
Шăпапа тĕл пулсан пултăм чăнлă.
Тĕнчере чун тени пурăнать!
Пуçа тайрăм эп сумлăн, танлăн.
Пурнăçпа пĕр талай пуласла.
Халь те çав тĕл пулу пит хаваслăн
Тепĕр хут килесле талпăнать...
Килтĕрех çакă чаплă самантăм.
Пурнăç кайĕ вара чăн çулпа!
Турă пăхнă пекех пăхатăп,
Тĕл пулу ман пулать-и тата?

* * *

Хитрелĕх пур çав тĕнчере,
Эс ху хитре килсессĕн.
Тĕнче уçать хăйĕн чунне
Хăйне те парнелесшĕн.
Йăлл! кулса пăх та, тĕкĕр пек
Хăвна эс кăтартатăн
Çак çӳллĕ йăрăс хурăнра...
Таçта тарса пытанасла
Кăлтăртатса кулан тата!
Ыр ĕç тăвас пек шухăшлатăн...
Çавăн чухне тĕнче хаваслăн
Ырăланать хăй чĕрипе...
Тĕнче сан пек лайăхланать-тĕк,
Эс ху та лайăхрах пулан.
Кулах, тăван, эс ырăланă

Тĕнче çуралнине курап!

* * *

Тĕнче сĕмĕ хăвăнра-мĕн...
Мĕн санра, ăт, çавă пур!
Çак чăна эпир пĕлместпĕр,
Тем шыратпăр ютăра...
Тухсан тух эс, хăватланнă
Ăш-чикри пĕр тĕнчепе.
Вара курăн, тĕнче, чăн та,
Уялать сан чĕрене!

* * *

Çак пурăнăç çинчен шутларăм,
Ун никĕсне шырарăм эп.
Ют хутлăха мĕн чуль хутларăм,
Тупмарăм хам валли кĕтрет.

Мĕн чухлĕ пуль сăмах вакларăм,
Çилентĕм пуль тепĕр чухне.
Мĕн кирлине, çук, калаймарăм,
Курмарăм пурнăç никĕсне.

Çапах хама эп пăрахмарăм...
Пит тарăхса çитсен татах
Эп тĕнчепе кăшт çураçмалăх
Тахçан тупсаччĕ-çке сăмах!

Сăмах çав пулчĕ «çураçулăх».
Сăмахĕ хăй çураçтару!
Сана çапла кăштах курмалăх
Çуралчĕ ку сăмах тату.

Татса та пачĕ пурăнмалăх:
«Çураçтарса эс пурăн», – тет.

Сăмах çак пулчĕ пит хăватлă –
Вăл никĕсре, вăл Турă пек!

* * *

Çул çинчи пĕр киоск
Чиркӳ евĕр ларать.
Калăн, хăй пĕр киот,
Пĕр иконостас...
Кам пырать, пуç çапать,
Тен, çурта та лартать...
Сан куçа çĕр майра
Хывăнса курăнать.
Пăхма питĕ ава-ан...
Ку çаппа-çарамас
Куç хĕсет мар-и-ха?
Пултăр сан ирĕкӳ,
Мĕн тума, тет, чиркӳ?
Куç умне çак киоск
Тухса тăчĕ çĕркаç...
Мĕн тума, тет, киот.
Вăл пĕрех чуп тумасть.

* * *

Çу иртнĕçем çутă çухалчĕ,
Кĕрхи каç хăй хуçаланать.
Пӳртри чӳречерен пăхсассăн,
Тĕнче хускалнăн туйăнать.
Кĕрхи çил вĕрчĕ хăлтăр-халтăр,
Кивĕ хапха кăшт сас парать.
Çут умĕнчи ача пĕр сассăр
Юмах кĕнекине вулать.
Унта тата хăватлă пулăм
Илсе каять тĕнче тавра.
Такам çырса хăварнă çутă
Тата асамлăн курăнать...

Ача çӳрет унта хăватлă
Лаша çине те утланса.
Çут хěçěпе сулса ярать те
Тěнче каять ырăланса.
Анчах çавна тěнче пěлмест-тěр,
Вěрет кěрхи çил вăйлăрах.
Çил ачисем те тăм писмен пек
Асса çӳреççě урамрах...

* * *

Ытла та стайлă хěрупраçăм,
Пуçна хăть çěклесе пăхсам!
Тěнче çапла ытла хăравçă,
Тесе нихçан та шутламан...
Эп ыйтрăм та, пěр сас пулмарě,
Çухалчě сассăм инçетре...
Пěр чěптěм шанчăк та юлмарě
Ман кӳтсе çитнě чěрере...
Пăхсам тата, пуçна çěкле те
Кăлар шăнкрав пек сассуна,
Çак юрăра... Тěнче хитре те
Сассу вара хитре тата...
Тěнче, тет, сасăран пуçланнă –
Сасă пулсан, тěнче пулать!
Эс сас парсан, тěнче сăпайлă
Çак хěрупраç пек курăнать.

* * *

Çěр çинче чăнлăхсем нумай:
Тур каланă пекех туйăнать.
Мěншěн-ха пěрне-çех-ха паман
Аташса та çӳрен пěр чуна?
Чун хăй тěллěн, пěлеп-ха, тесе
Тěрлě йăнăш тăвать пěрмай.
Йăнăшне тěллесе кăтартсан,

Килĕшмест вĕт-ха вăл, тупата!
Чăнлăх пĕр, тенине те пĕлмест.
Чăнлăх вăл йăнăш урлă килет...

* * *

Куç умне халĕ туррăн тухатăн.
Хам та пултăм пулас турă пек...
Пăхса ил те часрах манса кай-ха,
Ан шутла, пĕрле пулăп тесе...
Темĕн чухлĕ çумра эс пулсан та
Тĕршĕнеймен чунпа ман çума.
Пырса тăтăн пĕрех. Пуç таятăн,
Юлашки сывлăшпа-ши сывлатăн?
Сывлăш пĕтрĕ. Халь тин эп каятăп,
Вăхăт çитрĕ пулать. Тен, юлатăн?
Куçăнта çутă евĕр куççулĕ çунать.
Пăхса ил-ха, чăнах, тепĕре
Тĕкĕр евĕр мана, тен, кăтартăн
Юмăç евĕр теме тĕтĕрсе?
Куçа пăвнă пулех! Эпĕ ватă.
Эх, вĕçетĕп хăлатăн пĕрех.
Çак вĕçевшĕн сана тав тăватăп.
Турă евĕр юлсам ĕмрипех!

* * *

Çакăнса тăратăп эпĕ
Çӳлĕ ту çинче.
Эс кунта хăçан килетĕн
Ман чуна çăлма?
Çу та иртрĕ, кĕр те çитрĕ,
Сивĕтрĕ кăштах.
Çăлăнма та вăхăт çитрĕ,
Кил-ха хăвăртрах!
Эс килсен чун хушăнать-ха,
Ту та ишĕлет.

Ту çинчен персе ансассăн,
Ку тĕнче пĕтет!

* * *

Эс мана куратăн-и, тĕнче?
Сан умра тăратăп тăр пĕччен.
Ютшăнать вĕт çын та килĕнчен,
Кил те манăн юлчĕ çил çинче.
Çитессе шанатăп-ха каçчен...
Çутă пур-иç ман чӳречере!
Е ку пулчĕ манăн чĕрере?

* * *

Манса кайрăн пулĕ... Çумăр çуккă.
Халь нихçан та çăвас çук тепре.
Пĕлĕтĕн тахçан килсеччĕ çупккă,
Куç хăйех йĕпеннĕччĕ пĕрре.
Халь тинех ăна тек ас илместпĕр,
Кирлĕ мар пире тек сивĕ çил.
Ас тăватни, шурă тăм тивсеччĕ
Тин çеç шăтнă чунсене пĕр ир.
Ал парса, тен, уйрăлар чиперрĕн –
Уйрăлу та пит хитре тĕнче!
Сан куллу тута çинче чĕтреннĕн
Асра юлчĕ ман тута çинче...
Юрĕ ĕнтĕ... Кирлĕ мар йĕмешкĕн.
Иртсе кайрĕ пĕлĕт. Çумăр çук.
Тепĕр хут та чуп туса илмешкĕн
Аллуна тăсса парсамччĕ хуть.

* * *

Пĕр хĕр пек çеç пуласчĕ ман.
Хĕр пек пулсан çак тĕнчене
Эп çавăрттарнă пулăттăм.
Пĕрре куç хĕснĕ пек туса,

Тепре ахӑлтатса кулса,
Ҫӗнӗ тӗнче те тӑвӑттӑм.
Тӗнче вара... Йӑлт чӗрӗлет те
Татах кӑшт пурӑнас-ха, тет.
Ун юратас килет татах.
Ара, телейӗ те чунра
Ҫак хӗр умӗнче кӑна!

* * *

Тӳпери ҫӑлтӑрсем анаҫҫӗ
Ҫӗнӗ ҫул касхине ҫӗр ҫине.
Аннӑ чух ҫаклансах лараҫҫӗ
Чӑрӑшсен папкисем ҫине.
Эпӗ те тӳпере ялкӑшаттӑм,
Ҫӑлтӑр пулнӑ пуль, тен, эпӗ те!
Эпӗ те ҫакланса вӗт ларатттӑм
Пӗр турачӗ ҫине касхине.
Эх, ҫунатӑп ҫав... Ҫӑлтӑр ку, тетчӗр.
Ҫутатасчӗ-ха ку тӗнчене!
Тен, пӗр хӗр каччӑпа пырса тӑрӗҫ
Ҫавӑ ҫӑлтӑр айне тӗршӗнсе.
«Манӑн ҫӑлтӑр ҫӳлте!», – ӗмӗтленӗҫ
Ҫӗр ҫинче пӗр телей курас пек.
Телейне вӗт тытма килӗшмерӗҫ,
Ир енне ҫӑлтӑр сӳнчӗ вуҫех!

* * *

Пӗр хӗр умӗнче эп тӑратӑп
Пуҫа кӑшт тайса та пӑхса...
Мӗн-ма вӑл мана пӑхӑнтарчӗ,
Вӑл Турӑ пек, тен, курӑнса?
Тур умӗ пур, теҫҫӗ... Ҫав пулӗ?
Пуҫ ҫап эс ӑна, апла!
Пуҫ ҫапнӑ чух ҫулӑм та тухӗ
Куҫҫуль те тухать, ак, юхса.

Çапла вăл турамăш умĕн
Тăрса та пăхсан чура пек.
Вăл, тен, кĕл тусан каçарĕ...
Анчах та сăмахĕ ăçта?
Каларăм, эп тупрăм тем чухлĕ
Турамăш валли сăмахсем.
Хурланнă ман кăмăл та хухрĕ.
Халь тин пурăнатăп хуллен.

* * *

Çак тĕнче мĕнне пĕлмесĕр
Ман утса курасчĕ.
Ăнсăртран пĕр хĕр курсан,
Мĕн-ха ку теесчĕ.
Алăпа тытса пăхмасăр
Эпĕ ăненместĕп.
Мĕншăн-ха ку таранччен те
Ку хĕре пĕлмен эп.
Куçĕ симĕс, пуçĕ ăслă.
Калăн, ку çур Турă!
Пĕр пăхса кулса илсессĕн,
Ху та пулăн çурă...

# ÇУТ ÇАНТАЛĂК

* * *

Хĕле аса илетĕп.
Хĕле тепре килетĕп.
Асра пулин те тепĕр
Вăл чĕпĕттĕр мана.
Юра тытса пăхатăп.
Юр пур-ха, савăнатăп.
Анчах юра тытсан,
Юхать шыв аллăмран.

* * *

Уй çине пăхса илчĕç иккĕн,
Уй çине пăхса илчĕç виççĕн,
Уй çине пăхса илчĕç ялăн:
Ку уй пĕтрĕ тесе каларĕç.
Мĕн тума, тет, чăнах та, уйăн
Вăрман пек пулмалла марччĕ,
Пĕтнĕ тенĕ сăмах тухмастчĕ.
Мĕн, тĕнче пĕтнине курмастним,
Ыттисем пек кăштах савăнмастним?
Çук чунра ун йышши савăнăç
Нихăçан та пулас çук манăн...
Савăнаççĕ тĕнче пĕтнишĕн.
Эпĕр халĕ тин урăх теççĕ.
Эпĕр кайăпăр халь урăхла,
Мĕн пулни çине йăлт таптаса...
Ун пек харсăрлăх çуккă çав ман.
Таптама та хăрап. Аван мар.
Çавăнпа та тăрап анраса.
Мĕн пулса та иртет манпала?

Çынсем кайрĕç таçта аякка,
Палламаççĕ вĕсем халь мана.
Эпĕ юлтăм пĕр йывăç пекрех,
Çут уйри хурама пек кăна.
Ыттисем, ыттисем йывăç мар,
Халь тинех вĕсем курăк та мар!
Чул пулса талккишпех сарăлса
Выртса тухнă вĕсем уй-хирте...
Чул пулса пурăнма лайăх çав.
Ку тĕнче чулланать – кĕтсех тăр!
Шăкăр-шăкăр туса çех эс выртăн.
Ку пĕтет-ça тесе каласан,
Пĕтнисен хушшинче эс те пур-тăр!
Эсĕ те чул чĕреллĕ халь тин.
Шурă чуллăн шăлна кăшт йерсе
Питĕ ăслăн хăвна кăтартан...
Тĕнчере уйĕпе шурă чул.
Тыр акма çавăнпа май та çук.
Чăнласа кам акса çак чула?
Ĕлĕк çукчĕ-çке чул çак уйра.
Ку чулсем – пĕтнĕ чунлă çынсем.
Çав çынсем акăнаççĕ тем чуль.
Çут тĕнче хăй акать, чулланать.
Чул пулса ку тĕнче ютланать.
Кăшт ютланчĕ пулас, урăхланчĕ.
Ĕлĕк чух тул пуссиччĕ кунта.
Тулă мар халĕ – чул акăнать.
Çын чĕрийĕ çав чул пек пулать.
Çав уя хурама çеç курать.
Ун тавра выртса тухнă чулсем
Хула евĕр курнаççĕ пуль халь?
Тахçанах тет пулса аслă чӳк,
Чӳкĕсем çав чулсем пуль, ара.
Выртса юлнă вĕсем халăх пек.
Халăх юлнă пĕр уй шур чул пек.

Кам ăна халь шутлать, çав чула?
Хурами те хăрать шутлама.
Кĕтсе илнĕ чухне çынсене чӳк тума
Хăй те пулнă хавас шутлама...
Çут уйра йывăç пур. Хурама.
Ун айне кĕрсе вырт чул пулма!
Пăхса выртăн, таçтан аякран
Кайăксем тет килеççĕ... Йăва çавăрма.
Çук вара. Ун тавра чул йăва
Хула пек курăнать шыв çурсан.
Ĕлĕк пулнă пуль, чăн та, хула.
Пулнă пуль çыннисем таврара.
Халь вара пушă уй. Шурă чул
Купаланчĕ кăна ман чунра.
Хурама! Тепĕр хут чĕнсе ил
Чӳк тума эс хура халăхна!
Хурт вĕлли пек кĕрлеччĕр кунта
Тăрса тухнă чухне чӳк тума.
Çук пуль çав. Хура халăх халь çук.
Урăхланнă пулас мăчавар та.
Чăн тăван сăмахне калаймасть,
Çутă уй туррине пуç таймасть.
Хурама тек пĕрре те чĕнмест.
Вăл пĕччен. Çутă уй хуралçи, мĕн туса
Эс ларатăн халь тин çил çинче?
Çитрĕ мар-и сана хуйхăрса?
Чул пулар та пĕтер-и вара...
Шуралса çех выртар çут уйра.
Çавă вăхăт та çитрĕ пулас.
Кăшт хăрать хурама çавăнпа.
Ун тăрри хуçăлать çил килсен.
Тек чăтайĕ-ши вăл тăвăла?
Чул пулма чăнласах пит аван.
Ун чухне хурама кирлĕ мар.
Чул тени вăл çырма япали.

Çырмаланчĕ пулать тыр пусси.
Çутă уй... Чул çырма... Хурама...
Кирлĕ мар халь пире хурама!
Кам пулать тет кунта – чул пулать,
Хурама пек йĕрсе хуçăлать.
Хуçăлать çил çинче. Хăртăкран
Халь мĕнле тет тĕнче çуралать?
Чул тĕнче, çав пулса, тен, юлать...
Шухăшлать чулланан шур чĕре...
Çук вара, кăшкăрать çутă уй.
Çук вара, хумханать хурама.
Пĕтсе çитнĕ чĕре туйăмне
Эпир сиплĕпĕр уй çутипе.
Кил кунта, туп хăвна çак уйра,
Шурă чул пуçтарса хыв хула.
Ку вăл пулĕ çынсен чăн хули,
Шур чĕреллĕ çынсен шур хули.
Хурама та ун чух хуралса,
Хура халăх пек харăс пулса,
Шавласа чĕнĕ çĕн халăха
Чӳк тума. Ун чухне тепĕр хут
Эпĕр курăпăр чăн халăха
Шур чĕреллĕ чăн-чăн чăваша.
Шур чултан пухса тунă тĕнче
Чăнласах чĕрелленĕ вара!

* * *

Çĕр çинче тĕлĕнтермĕш нумай,
Тĕлленсе пĕтереймĕн пурне те.
Тĕллесе те персе ӳкереймĕн –
Çавăнпа тĕлĕнтермĕш тарчĕ!

* * *

Тумла сассипе вăранчĕ

Пĕр çамрăк сап-сарă хĕр.
Чĕри ун теме ăнланчĕ –
Иртрĕ пуль терĕ хĕл?

Савăнăçĕ ун вышкайсăр
Кайăк пек кайрĕ вĕçсе.
Кайăк пекех юрламасăр
Епле чăтăн эс ку чухне?

Чунĕ ун вĕçĕ-хĕррисĕр
Аслă тĕнче тăршшипе.
Пурăнĕ-ши хĕр чĕрисĕр
Çакă тĕнче кунĕпе?

Халĕ вара чунĕ килчĕ
Ирхи çак тумла сассипе.
Хĕл ĕнтĕ мĕн вăл – вилчĕ
Сарă хĕвел ăшшипе.

* * *

Нарăс уйăхĕн вĕçĕ.
Пĕтрĕ сив хĕлĕн ĕçĕ.
Юр çывăран çĕрте
Çумăр çăвать çĕрĕпе.

Кун пеккине тĕнчере
Урăх пĕрре те курман.
Тен, çавăнпа чĕрере
Тухрĕ кĕтмен тăман.

* * *

Тахçанах эпĕ çырманччĕ
Сар хĕвел çинчен.
Уйăх тăршшипех кайманччĕ
Пĕлĕт питĕнчен.

Акă халĕ питĕ лайăх
Сар хĕвел пăхать.
Сар хĕвел пăхсан çанталăк
Кăштă вăранать.

Манăн чун та кăшт вăранчĕ
Пурнăç ыйхинчен.
Çут тумла пулса тумларĕ
Шур пӳрт тăрринчен.

* * *

Çутă çанталăкăм манăн,
Юр айĕнчи сивĕ çĕр!
Мансăр епле пурăнатăн,
Çу килессе кĕтнĕçем.
Çитĕ ак санăн та вăхăт,
Кайĕ шур юр сан çинчен.
Сывлăн вара эсĕ тутлăн
Тепĕр сив хĕл лариччен.
Час ак килсе эсĕ таптăн
Уçă хура кăкăра...
Ăшă сăмах та калăн
Ирпе сар хĕвел пек пулса.
Тухĕ çие çĕн çĕр йышĕ,
Пулĕ апат – тупата.
Эсĕ çĕре те кышлăн,
Хырăм выçсан – мĕн тата?
Çĕр вăл анне пек тутлă,
Çийĕр тăранниччен!
Çавна курса тăнă турă
Савĕ пире – кайиччен.

* * *

Çăва кĕретпĕр пулинех...

Кĕтретлĕ пек юр кĕрчĕсем:
Юлашкисем çеç çырмара,
Шыв юхтараççĕ пĕтнĕçем.
Пул шыв пек эс таса та çутă,
Пуçа тайса эс ут çил пек.
Хĕвел пекех кĕтретлĕ çу та
Вара килет пуль папка пек.

* * *

Куртăм-ха, куртăм... Хăва çеçкере.
Анчах та пымарăм, пăхмарăм...
Хама эпĕ туйрăм, паллах, чиперех.
Анчах та, шутлатăп, çухатрăм.
Пырасчĕ теп-ха, çеçке, сан пата.
Эс кăпăшка, шап-шурă, таса...
Санпа та пулсассăн, кăштă кăна
Пил парĕ мана хăван пĕр турачĕ...
Çил майăн сулса мана та ăсатĕ.
Вара эпĕ кайăп чунпа савăнса.
Ара, çеçке çурнă хăван сăн-сăпачĕ
Манра та пур пулĕ? Сăна эс çавна!
Çавна та курсассăн, туратăн хăвачĕ
Чăнах та упранĕ санра малашра.
Халь тин вара эсĕ мĕн-ма-ха айваннăн
Пăхса иртсе кайрăн унран?

* * *

Пĕрре çуркунне систерчĕ темскер...
Килтерчĕ куçа хупахăн çеçки,
Таçтан тупăнать вĕт çавăн пекки!
Вăл тухнă тапса çак ăшă ирпе
Пуçне сулса илчĕ... Акă тĕнче!
Апла, пурăнатпăр-ха эпĕр тепре!

* * *

Йăмра симĕсленнĕ, атьсем!
Хурăн та кăшт кăчкăланнă...
Тен, çавăнпа тĕксĕмленнĕ куççем
Çĕн ĕмĕтпе кăварланнă?
Çиçрĕç те çиçрĕç... Кулă тата!
Кулă таçтан сиксе тухрĕ.
Тополь çулçи пуль ман куç, тупата!
Кулă вара – лĕпĕш вĕçевĕ!
Пурте пур пулĕ... Ку çуркунне
Ман кăмăла тивĕçтерчĕ.
Атьăр, атьсем, тухар ун умне!
Пире вăл кашличĕ çитертĕр!
Ас тăвăр, эпĕр епле ирпеле
Кĕтӳ пек уя та тухаттăмăр!
Унта тĕрлĕ тĕслĕ кăшкар ӳсетех.
Эпир çавăнпа тăранаттăмăр...
Халь те çавнах вĕт кĕтетпĕр!
Атьăр, шăхличĕ туса пĕр кана
Шăхлич каласа вĕçетпĕр.
Илтчĕр мĕн пур кайăксем таврара
Килнĕ «шăхлич» ку, тетчĕр.

* * *

Çулçă татрăм, тытса пăхрăм
Çут хĕвел çине.
Тĕнчесем тапса тухаççĕ
Симĕс авăртан.
Вĕлтĕр-вĕлтĕр симĕс çулçă
Куçлăхран аван.
Çулçă витĕр куртăм пурнăç.
Курăнать таса.
Аякран таçтан хăпарчĕ
Сар хĕвел тата.
Ак тата кунта тем çырнă
Шăпана пĕлсе.

Пĕр çулпа утса пăхасчĕ,
Чăн çăтмах тесе...
Пăхрăм-пăхрăм çулçă витĕр
Куртăм чăн тĕнче.
Пурăнатăп эпĕ халĕ
Çулçă ăшĕнче.

* * *

Сывă-и, ешĕллĕ çуртăм,
Килтĕм санпа тĕл пулма.
Пултăн эс маншăн чăн турă
Манăн чуна çутатма.
Юр выртнă чух эс пушшех те
Симĕсчĕ, чăн та, ытла.
Халĕ вара, кĕçех, тен,
Пуçлăн турат хушма?
Сан айăнта питĕ хăтлă –
Çурĕ тăрри йĕкелсем.
Пулчĕç пакшашăн тутлă
Хĕл тăршшипе çимĕçсем.
Пулчĕ вăл маншăн та чаплă.
Елка пекех халь ларан...
Саншăн çак çурт темĕнле те,
Маншăн вара – пĕр тĕнче!

* * *

Пĕр вăхăт çу уйăхĕ чаплă.
Садлă пахча çеçкере.
Пыл хурчĕ сĕрлет хаваслăн.
Çав сасă халь – чĕрере.
Тепре тем, мĕнне пĕлместĕн,
Çурçĕр килсе амантать.
Çурçĕр енчен çил вĕрсессĕн,
Сад ман шăнсах ларать...
Пыл хурчĕ те сас памарĕ,

Çеçке тăкăнать çĕре...
Апла та, мĕн-ма хаваслăн
Тапать ман чĕре тепре?
Ку паллă, тен, эс те пĕлетĕн?
Килет ку çу кунĕ ирпе.
Çавна халĕ эп кĕтетĕп –
Çу кунĕн ун хăйĕн ташши!

* * *

Ем-ешĕл йывăç çырмара
Шутлать пуль çулçине сарса...
Мĕн-ма, тет, сивĕ çырмара
Юрсем выртаççĕ, шыв юхать...
Пулмасть-им сăрталла тухса,
Çĕн пурнăçа та пуçлама?
Пĕлмест-ха вăл айван пуçпа
Сăртра хуçаланан вăя.
Шутлать-ши, ку çырма суя!
Çук, суя мар. Ку чăн çырма!
Чăн пурнăç никĕсĕ кунта!
Пуçла эс пурнăç çырмара.
Çак çырмаран тухан сăрта!

* * *

Юман йăраланать аран-аран...
Вăл васкамасть. Вăл пинлĕх çуллăх.
Çулсем иртсен кайран-кайран...
Тимĕрленсе çитет тăпраллăн,
Чăн пурнăçлă пулса тăрать.
Тен, эпĕр те çаплах пуль пулнă,
Çĕр ĕçĕпе те ӳснĕçем.
Юман пекех эпир те ĕмнĕ
Хура тăпра сипетлĕхне...
Тăпра çисе юман пек пулнă
Пинсем çулсем те тăршшĕпе.

Юман пекех эпир те халĕ
Йăралантпăр çĕр çинче.
Турат çумне турат хушатпăр
Тĕнче юманланать тесе!

* * *

Хурама çеçки çинчен çырман эп.
Эп ăна курман та халиччен.
Курсанах вара тем пек килентĕм,
Пуянлантăм эп те йывăç пек.
Ун çеçки, пăхсан, пĕр çăлтăр майлă
Çаврашка çеç пĕчĕк куç кĕски.
Ун çине пăхса хăвна тупсассăн,
Эсĕ пулăн ху та çын тĕнчи.

* * *

Тӳпере темле йывăç пур.
Ларать тепĕр чух çеçкере.
Шăнтса пăрахсан тепĕр чух
Тăкать çеçкине çĕр çине.

* * *

Ку сивĕ çумăр кĕрхи пек
Çăвать эрнипелех.
Пырса пăхсассăн, чиперех
Ларать-ха ман чие.
Çапах та йывăр пуль ăна
Çак сивĕре çеçке çурма?
Унпа пĕрле пăшăрханса
Тăратăп чунăма çурса...
Мĕн тăвăттăм эп халь сана,
Сана çеç хӳтĕлес тесе?
Çумăр çăвать çеçке çурсан.
Пулас-и хам çеçке?
Ах, тур! Ах, сивĕ те иккен

Ку сивĕре ларма.
Ку тĕнчере эп сĕм пĕччен
Пĕлейĕп-ши çурма.
Вĕт халĕ чие пек ларса
Çеçке çурни çеç мар.
Çак сивĕ çумăра чăтса
Кăштах чăмăртанар!
Кайран кăштах чăн çу çитсен,
Хĕрлĕ çырла пекрех
Хĕвел çинче пиçсе çитсен –
Чĕре патнех çитер!

* * *

Канăçлă пурнăçăм манăн
Пур пек таçта çакăнта.
Пултăм тин çеç вĕçсе аннăн
Юр пек çемçе те таса.
Ӳкрĕм ак вăрттăн пĕр сассăр,
Час çухалап пулас.
Сарă чечек çакна кĕтнĕн
Кăшт сарăлать татах.

* * *

Курасси пулать-и тек
Эп пĕлместĕп те.
Эпĕ халĕ хам путек.
Тринкки! çеç сикеп.
Татасси пулать-и тек
Ешĕл чечеке?
Ун пекки тек çук, пĕлеп,
Çĕр çинче тепре.

* * *

Тăри сассиллĕ уй тăршши.

Шур юр кайса пётмен-ха.
Сăрт çамкисем хуралнă та
Çĕр сас парать тăрăлтатса.
Тӳпе таран вĕт хăпарать,
Тăри çавна вĕт пултарать.
Ара, пуль турă хăй ярать.
Хăйне çĕрпе çыхăнтарать.

* * *

Эп çыратăп пĕчĕк сăвă
Çут çанталăкăм çинчен.
Тен, пулса чунра ман тăвăл,
Пĕлĕт ăмăрлă чухне.
Эх, çанталăк, мĕншĕн халĕ
Эс тăмастăн çуталса?
Ак, паян та килсе пачĕ
Пысăк çумăр шавласа.
Ёнертен вĕт кăмăл тарчĕ.
Паян килĕ терĕм-ши?
Çут çанталăкăм ман – сăвă
Шăрçаланчĕ тумламран.
Ман çанталăк та халь ырă
Чуна çумăр çырнăран.

* * *

Паян çăвать вĕт çумăр.
Хăймаланать тӳпе.
Ун айĕнче эп пултăм
Пĕр пĕчĕк тумлам пек.
Çак тӳперен эп ӳкрĕм,
Шуратрăм çак çĕре.
Кӳлленчĕкре те путрăм,
Шыв пултăр-ха тесе.
Халь ĕнтĕ пысăк туйăм
Чунра хуçаланать.

Эп çумăр евĕр çурăм.
Апла, эп пурăнап!

* * *

Кашни чул таткин пур сĕмĕ...
Ун пур çыхăнуллă темскер.
Сана вăл пĕрмай хăй пек чĕнĕ:
Килсе эсĕ кур-ха тепре!
Пăхма вăл, чăнах та, чул пек çех,
Выртать вăл кунта ĕлĕкрен...
Çав чул та туртать ак кăчăк:
Çын пек калаçать пĕччен! –
Тахçан эпĕ пулнă çын евĕр,
Анчах та ман вăйăм хухрĕ,
Пин çул çакăнта выртнă чух.
Халь тин кирек кам та урлă
Тапса та иртет урипе.
Килсемччĕ тепре, чул ялтратăр
Чĕре те çумне тытнипе.
Эх, кулĕç вара чун тухмалăх
Ытти вак чулсем çул çинче.
Эп санăн вара юратмалăх
Каллех пулса тăрăп тĕнче!

* * *

Тополь мамăкĕ вĕçет
Шурă юр пекрех.
Юрату каллех килет
Ĕлĕкри пекех.
Акă, мамăк вĕçсе анчĕ
Шурă пуç çине.
Чунăм ман вара хăпарчĕ
Таçта çитиех.
Эх, тепре тытса пăхасчĕ
Шурă мамăка.

Эс, ас ту, апла пулсассăн,
Çунăн тамăкра.
Çук, çук, çук, ун чух эс ху та
Пулăн çăтмахра.
Шурă мамăк вěçрě шуррăн
Çутă уçлăхра.

* * *

Паянхи пек эпě ăслă
Нихăçан пулман.
Хěвел хăй те алă тăсрě,
Туслă, тет, пулар!
Чăн та, ěнтě çаплах пулчě
Утă çулнă май.
Курăк çулнă чух шак чулě
Çавана мăкатрě çав!

* * *

Ванса пěтнě, пěтнě чечексем,
Эп сире шеллерěм теменччен...
Акă халь тепре пырса пăхсан та
Хам та пултăм хуçнă пек тěпрен.
Чунăм ванчě. Эпě те чечек пек
Тепěр чух пуласшăн хитререх...
Ах, анчах сирěн пекех вансассăн,
Эпě тек пулаймăп çын пекрех!

* * *

Ут уйăхě пěтрě пулас,
Анать хěвеллě кун.
Çӳлтен çăвать тивлет пек
Тахçан çухалнă чун.

* * *

Тополěн мамăкě пěтрě.

Выртать сапаки саланса.
Çанталăк çавна çеç кĕтрĕ,
Çумăр çăвать шарласа.
Сивĕ-çке ку çу варрийĕ!
Кайрĕ-ши çу кăнтăра?
Юлчĕ ăшра ун шăршийĕ
Мамăксăр тополь тавра.
Çилĕ те вĕрчĕ çиллеслĕн
Çурçĕр енчен тăрăшса.
Пурпĕр пĕрех çу килеслĕн
Пăхрĕ хĕвел савăнса.
Халь, тен, çак пĕчĕк савăк,
Сарă хĕвел курăнни.
Пултăр манра пĕр авăк –
Пултăр çав чăн пурăнни!

* * *

Хĕрлĕ-хĕрлĕ сăнлă
Вĕрене паян.
Эпĕ тем те курнă,
Кун пекки курман.
Вĕрене çутийĕ
Çапрĕ-ши сăна?
Юрату паллийĕ
Пур пек халь унта.
Ан пĕтсем, çут палăк,
Ан вĕрсем, сив çил...
Тайăлать çут палăк,
Сапалать çутта.
Ун çине пусса та
Эп пырап утса...

* * *

Талма пуçланă çулçăлла

Эп тытӑнса тӑратӑп.
Эс, ҫулҫӑ, тытӑнсам татах,
Санра ман пурнӑҫ, эп туятӑп.
Санпа пӗрле эп ҫил ҫинче
Чылай пуль ярӑнтӑм сӑпка пек.
Хӗвел ансан та ир ҫинче
Кайӑк пекех юрларӑм тепӗр...
Халь тин тупайӑп-ши татах
Тӗнче ҫилне тытмалӑх чӗлпӗр?
Ак килсе ҫапӗ те – чутах
Талса ӳкеттӗм вӗт! Урсах
Вӗрет тата кӗрхи сив ҫил...
Ӑна чӑтса пулмасть, паллах.
Ӳкетӗп эп. Ӑҫта ман ҫул?
Вӗҫсе каятӑп тӗнче ҫийӗн...
Пӗтме пуҫланӑ ҫулҫӑлла
Тепре ҫех ярӑнса илесчӗ...
Тавах вӑрманлӑ сӑпкама,
Тавах чӗвв! саслӑ кайӑка –
Ун сассисем те пӗтрӗҫ халӗ...

* * *

Йӗри-тавра ҫӗр тӗрлӗ паллӑ:
Хӗрлӗ пилеш, сар вӗрене...
Вӗсем пире темскер каласшӑн
Хӑйсен пӗр вӑрттӑн чӗлхипе.
Ак, кайӑк та килсе чӗвлетрӗ
Хӗп-хӗрлӗ пӗр пилеш ҫине.
Ҫырла ҫисе теме пӗлтерчӗ
Пуҫне кӑшт тайнӑ пилеше.
Ак, ҫил ачи те ҫавӑрттарчӗ
Сар вӗренен сар ҫулҫине.
Епле-ха вӑл пӗлме пултарчӗ
Сар вӗренен чӑн шухӑшне.
Пӗр эпӗ ҫеҫ пӑхса тӑратӑп

Çĕр тĕрлĕ паллă хушшинче.
Хăлхасăр-куççăр пек курнатăп
Чĕлхе каласшăн тĕнчере.

* * *

Çумăр çапса тухрĕ ман çула...
Эп тармарăм. Манăн çул таса.
Çулçă сарса тухнă вĕт ăна!
Çав пичетлĕх пулчĕ-ши чуна,
Шăпа евĕр çул хывма тата.

* * *

Ăшă çумăр çуллахи пек
Шăпăр-шăпăр турĕ.
Шур тумламĕ ӳкнĕçемĕн
Турă та килет-тĕр.
Эпĕ утрăм, васкамарăм...
Çумăр вĕт сипетлĕ!
Çумăр айĕн утнăçемĕн
Çын та вĕт ӳсет-тĕр!

* * *

Ăмăрлă пĕр кăмăлсăр çанталăк
Çумăр çунипе кĕвĕленет.
Пуç çине эп карнă хӳтĕ чатăр
Ман çине пĕрех шыв ӳкерет.
Ӳкерин! Ӳкерчĕк – шыв кӳлленчĕк
Пĕлĕт çутине кăшт евĕрлет.
Ун çине ӳкен тумламĕ вĕттĕн
Тĕтре евĕр тĕнчене тĕрлет.

* * *

Çурхи ем-ешĕл йывăççем

Çĕр тĕслĕ пулчĕç ĕнтĕ...
Çав çуллахи çĕр ыррисем
Йывăç çинче пуль халĕ?
Çĕр çĕнтерет ахальтен мар, –
Вĕт йывăç та çĕр пайĕ!
Самантăха çуркуннепе
Вăл пĕлĕт майлă пулнă...
Анчах та пĕлĕт тĕсĕ те
Çĕр майлă пулчĕ халĕ.

* * *

Хура-шур пĕлĕтсен пĕр хумĕ
Каллех килет çавăрăнса.
Каллех çăвать хитре çеç çумăр
Пĕр чарăнса та вăйланса...
Çанталăк тăчĕ ку чух япăх,
Ăшă килмест пуль тепĕр хут.
Çуллахи пек пĕрех пит лайăх.
Чĕре те тапрĕ питĕ шух!
Йĕпеннĕ çулçă пек айванлăн
Выртас килмест ман çĕр çинче.
Çаралнă вулă пек хăватлăн
Чĕресчĕ тетĕп тӳпене...
Вĕçетĕп эп хур-кайăк евĕр
Таçти пĕлмен çут тĕнчене.
Унта, тен, кĕтĕп эпĕ тепĕр
Çурхи кунсем те килессе!

* * *

Хăтлă хутлăх çакă чăрăш...
Айĕнче тăрса пăхсам!
Çилĕ пулчĕ питĕ чăркăш,
Тăкăнать йĕкел пĕрмай.
Алла илтĕм, пĕр йĕкелĕ
Питĕ çуттăн курăнать.

Хупписем ун пит йĕркеллĕ.
Тен, вăрри те тупăнать?
Кайăк евĕр-и шырарăм
Тутлă чăрăш вăррине.
Эп шырарăм – тупаймарăм.
Кайăк мар çав... Ирхине
Эп апат тума пĕлмерĕм,
Пăхса чăрăш тăррине.
Эх, унта йĕкел çĕклемĕн
Çакăнса тăрать илемлĕн
Хĕллехи куна кĕтсе.

* * *

Сип-сивĕ уçлăхра чăлтăртатать тĕнче.
Хĕвел тухать. Çунать кăвак тӳпе.
Çĕркаç шăнса çитмен хура сукмак çинче
Кӳлленчĕкри пăр чăнкăртатайрĕ ерипе...

Хĕлле çитет. Юр ӳкнĕ вырăнта тĕл-тĕл
Хура тĕмескесем шутлаççĕ хĕл каçма.
Çурла çут уйăх вырмара пек халĕ
Пĕр çăлтăр хăвармарĕ шунă май.

Аван мана çапла утса пыма.
Сив çил те, çак хура вăрман та
Мана халь саламлаççĕ хăйне май –
Кун пеккине чылайранпа курман.

Чĕре ман савăнать сивĕ пулсан та.
Ман чунăм ялтăрать тĕнче пекех.
Çут кунăм майĕпен иртсе пырсан та
Тăрса юлать асра вăрман пĕрех.

* * *

Шăтăр-шатăр! шатăртатрĕ

Шур юр витнĕ шур тĕнче.
Аслати пекех хăратрĕ
Çак пăр евĕр кĕленче.
Пусса пăхрăм та – путап вĕт,
Ку кӳлленчĕк йăлт хытман...
Çулĕ те ытла шуçлак пек,
Пĕр ӳксен ху та хытан!
Пурпĕрех утса пыратăп
Шатăртуллă тĕнчепе.
Темĕн чуль чун хăрасан та
Савăнап пăр ватнипе.

* * *

Шутлаттарчĕ кĕрхи тĕнче.
Шаплаттарчĕ çĕр саслă пулăм.
Эп пĕлмерĕм, ăçта, хăш енчен
Сăрлатса ыратать çан-çурăм?
Пĕрре пăрлă та юрлă çăвать,
Хушăран çил-тăман та вĕçтерчĕ.
Утнăçем çын ури те шăвать,
Пĕринче, акă, чăн та, ӳкерчĕ...
Мĕн каласшăн пире кĕрхи кун?
Асăрханăр кăштах тесшĕн мар-и?
Тепĕр чух чĕрери вĕри юн
Хуранри шыв пекех хăпармар-и?
Тарăхатăн чăнах хур пекех.
Эпĕ мар, урăххи йăнăш турĕ...
Ун пекех эсĕ ху та ӳксен,
Эсĕ мĕн каласа та хурăн?
Шутарать кĕрхи кун, çын шутлать,
Ӳкес марччĕ-ха, тет, пурнăç урлă.
Çул çинче пăрлакки тупăнать,
Пăр çинче хăвна йăлт курăн.

# АРÇЫН

* * *

Пĕр çын кăмăлне те пулин
Кăштах та пулсан ман юрасчĕ.
Кайран вăл манран култăрин!
Пĕрех унпалах ман пуласчĕ.

Çын кăмăлĕ мĕн вăл, тесессĕн,
Нимех те калаймăп тӳрех.
Анчах унпала эп вĕçессĕн
Туятăп хама çӳлерех.

Çапла туйăмпа эп çӳретĕп,
Шыратăп çав çут кăмăла.
Унпа юнашар эс кĕтретĕн
Кĕрсе те каян пурнăçа.

Анчах тем пекех шырасан та
Курмарăм ун пек кăмăла.
Ун пек кăмăл чăн тупăнсан та
Пулмасть пуль манран юраса.

* * *

Юрлать пĕр арçын çуттăн,
Сирет тунсăхне юрăпа.
Илсе те каять кăвак утăн
Таçти аякри уçлăха.

Унта, тет, хаваслă пурнăç,
Унта чăнласах юрату.
Унта эс, çитсессĕн, пулăн
Чăн-чăн юр ăсти – ху!

Ун чух сан юрру та хускатĕ
Çак тунсăхлă тĕнчене.
Сан хыççăн çынсем те тапранĕç
Çынсен кăмăлне итлеме.

* * *

Çын кулса ларать аван.
Çын мĕнне пĕлетпĕр.
Кирек мĕн те каласан,
Ĕçпе çеç виçетпĕр.

Акă, курăпăр, камах
Ĕçлесе кăтăртĕ.
Калăн, тепĕр чух юмах
Çĕкленсе хăпарчĕ.

Мĕн каланă, тунă, тет,
Авалхи чăвашăм.
Халь вара мĕн-ма-ха эс
Питĕ кутăнлантăн.

Сан ĕçӳ çĕрсе выртать,
Сăмаху сан пĕтнĕ.
Хупаха эс çул тытан,
Унта сутнă ĕçкĕ.

Ĕçсе янă пурнăçна
Эс татах сутасшăн.
Халь тепре татах хăвна
Сутса пăх – сăмахшăн.

* * *

Сăвăç тени кирлĕ мар халь.
Сăвăç тени ухмах.
Тем пек чуна хурсан та

Пулĕ ку чух кăлăхăх.

Ĕлĕк вăл, эсĕ ас ту-ха,
Час пухăнатчĕç çынсем.
Сăвă тесен, савăнатчĕç
Пурнăç тăвас пекех.

Халĕ вара кирлĕ мар пуль
Çын пурнăçне кăтартма.
Сăвă тесен халĕ кулă
Кăшт палăрать тутара.

* * *

Эпир нимрен те хăрамастпăр.
Мĕн пуласси пулать.
Шур юр пулса эпир выртатпăр,
Хĕвел пăхсан, юхса каятпăр,
Вара, тет, мĕн юлать?

Çут хĕвел пăхать-ха,
Шурă юр выртать.
Кăсăя юрлать-ха,
Апла, кун пулать.

Эпир нимрен те хăрамастпăр.
Мĕн пуласси пулать.
Курăк пулса шăтса тухатпăр,
Кĕрхи кунпа хăрса каятпăр,
Вара, тет, мĕн юлать?

Çут хĕвел пăхать-ха,
Çурхи шыв юхать.
Кăсăя юрлать-ха
Апла, кун пулать.

Юлать тӗнче, юрлать пӗр кайӑк,
Хӗвел те тепӗр хут тухать.
Вара каллех çурхи кун майлӑ,
Шур юр хӗвелленсе юхать.
Вара, тет, мӗн пулать?

Çут хӗвел пулать-ха,
Курӑкӗ тухать.
Кӑсӑя юрлать-ха,
Апла, кун пулать.

* * *

Чун ывӑнса çитсессӗн, эсӗ тух,
Тухсам çынсем патне, тухсам уя.
Пӗр çаврӑм сывлӑша пухса кала эс «Ух!».
Вара тек кирлӗ мар уксахлама туя.
Туяланатпӑр çав вӑйсем çукрах чухне.
Тен, тайӑлса пӑхатпӑр, кам-ха ку тесе.
Шыратпӑр хамӑра. Тупатпӑр та-и, тен?
Тупсан вара, эх, савӑнатпӑр. Çиленетпӗр те.
Ӑçта вара çӳренӗ эс çӗтсе, айван,
Хӑвна ку таранччен те тупайман.
Ширанӑ эс хӑвна урӑх çӗрте, çынра.
Эй, ху, тени вара упраннӑ хӑвӑнта кӑна.
Халь ӗнтӗ кӑшкӑр тепӗр хут, ухлат.
Сан «Ух!» тени хӑпарттӑр сан чуна, чуллат.
Чуллат хӑвна, хӑвна эс тупнӑ тин,
Эс çавӑнпа та пултӑн халӗ çын.

* * *

Шӑвать темӗскер пӗр сисӗнкӗсӗр.
Çӑварсӑр вӑл, куççӑр, алӑсӑр...
Тытса та пӑхаймӑн, куçпа та виçеймӗн.
Çавӑ чӗрчун вӑл санра-тӑр!

Ăна халь хаклатпăр пурнăç тесех.
Иртет вăл, чăнах та, сасăсăр...
Çук, çук! Тепĕр чух çуйхашу та пулать.
Анчах та иртет вăл паллăсăр.
Çак пурнăç юххи пит тарăн пулсан та
Каçхи çутă пек курăнмасть.
Таçта темĕскер пек, çавă кăна.
Каçа тĕсесен те тĕсеймĕн.
Сахал-им çуралчĕç, çухалчĕç вĕсем
Хăйсен вырăнне тупаймасăр.
Тен, эс ăнланатăн ун сассине?

* * *

Пĕр юратусăр пурăнма май çук.
Юрат – вилсе каяс пулсан та!
Ак, лĕпĕш вĕçсе тухрĕ чунăм пек.
Эс лĕпĕш хыççăн вĕçсе пăх-ха халĕ.
Е çеçпĕл тат ун çиçкĕнне туйса.
Татса илсен шелле вара ăна...
Епле вара чечек чунне курмарăн.
Пĕтертĕн вĕт. Çук каçару сана.
Кирек мĕнле килсе тухсан та халĕ
Çак юрату пĕр çухатусăр çук!
Юратрăм терĕн пулĕ те, пĕр сасă
Çав вăхăтра çухалчĕ сывлăш пек.

* * *

Тĕнчере пит хăрушă паян...
Самантрах мăйкăча çакланан!
Пул хăюллă, хитре те аван –
Сан çулу пуçланать çавăнтан.

Пулнă халлă эпир авалтан...
Хур курма çĕр çине çуралман!
Пирĕн пур хамăрта пĕр саккун –

Хамăра çеç куратпăр çак кун!

Тапăнаççĕ пире ют çынсем...
Вĕсенчен упранасчĕ тесе,
Кĕл тăватпăр сире, хăватсем.
Ан пăрахăр пире вут çине!

Пурăнатпăр эпир Çĕр çинче...
Çут çанталăкăмăр пирĕн Анне.
Çут хĕвелĕмĕр пирĕн Атте –
Вĕсенчен уйрăлмастпăр пĕрре те!

Пултăр халăхăн пĕр шухăшлав:
Никама пăхăнмастпăр паян.
Шухăшлатпăр эпир хамăрла –
Тĕнчепе çураçса пурăнма.

* * *

Кĕтме вĕрентĕм эп тинех.
Кĕтни питех те усăллă.
Кĕтнĕ чухне кăна пĕлен:
Тĕнче-мĕн урăх курăмлă!
Кĕтсен-кĕтсен аптрамалла,
Хăвна çисех яратăн.
Вĕрентĕм халь шухăшлама.
Халь шухăшра пурнатăп.
Мĕн-ма тесен, каллех кĕтеп
Çак пурнăçа çиленнĕн.
Кĕтсе ларатăп телее
Вăл килессе пĕлменнĕн.
Телей тени! Ун усси çук.
Кĕтме те кирлĕ мар, тен?
Кĕтме вара вĕреннĕ чух
Хăвна чăнах пĕлетĕн.
Мĕн пур-и, çук-и – курăнать.

Тимĕр пекех халь вăхăт.
Çав вăхăтра-ши çуралать,
Çак пурнăçăн хăвачĕ?

* * *

Кĕтетĕп, кĕтетĕп, кĕтетĕп...
Кĕтетĕп эп тем килессе.
Эп хам вилессе те пĕлетĕп,
Вилесчĕ-ха, теп, киленсе.
Киленĕçлĕ вилĕм, епле ку,
Епле ку хаваслă тĕнче?
Çухалĕ сасартăк илемлĕн
Тепре ялтăрса çех илсе.
Ялтратăр, çухалтăр, ан килтĕр
Нимле урăх туйăм тавраш.
Тĕнче те киленĕçлĕн вилтĕр –
Манпа пĕр танах каварлаш!
Киленĕçлĕ вилĕм – ку чаплă.
Çак туйăмшăн халь пурăнар!
Кам пурăннă, тет, пĕр майлă
Вăл пирĕншĕн ютă мар.
Кĕтетĕп, кĕтетĕп, кĕтетĕп...
Кĕтетĕп эп тем килессе.
Эп хам пурнасса та пĕлетĕп –
Пурнасчĕ-ха, теп, киленсех!

* * *

Икĕ пайран тăрать тĕнче.
Пĕрремĕшĕ вăл – эсĕ.
Иккĕмĕшне шыранă чух
Хама та тупрăм эпĕ.

* * *

Çынпала пурăнма пĕлеймерĕм.
Хама хутăм пулех пысăка.

Çын умне пуç тайса килеймерĕм,
Тăрса юлтăм пĕччен хутлăхра.
Пурччĕ вĕт-ха чунра савăк туйăм
Çынпала пĕрле пулнă чухне.
Пит вăраххăн сăмах эпĕ хушрăм,
Витеймерĕ пулас çын чунне.
Пурпĕрех! Эп пĕччен те юратăп
Майĕпен пĕр сăмах каласа...
Эп пĕлетĕп хама. Эп юравлă
Çынсемпе те çынла пурăнма.

* * *

Çакă тĕнчере çĕнни нумай.
Киввине те манас марччĕ ман.
Тусăмпа пĕрле те утнă май
Иртнĕ кун аса килет пĕрмай.

Ас тăватни, тусăм, çамрăк чух
Халăхпа пулсаччĕ эпĕр те.
Пулнă пулĕ тепĕр чух пит шух,
Çавăншăн асап тӳсетпĕр те!

* * *

Çак тĕнче тупсăмне эс тупаймăн.
Шырасан, тупăн, тен, пĕр ултав.
Ку тĕнче пурăнать хăйне майлă
Акă, ыйтăн та пулĕ хурав.
Ун хуравĕ пурах, вăл чĕлхеллĕ.
Чĕнме пĕл те илтетĕн пĕр сас.
Çак тĕнче вăл сап-сарă хĕвеллĕ
Çаврăнать сан тавра пĕр кас.
Пĕр чĕлхе тупсанах çураçуллăн
Ытамне вăл сарать сан валли.
Мĕншĕн-ха эс вара пит салхуллă
Пăхса тăтăн ыйту паллин?

Сан ыйту вăл хăйех пĕр тĕнче-çке,
Ыйтура чăн хуравĕ те пур.
Ун çаври чи çӳлти пĕлĕтрен те,
Ун çурaçăвĕ ху эсĕ пул.
Çураçуллăн эс пăх, çураçтар-ха,
Çавралантăр тĕнче çаврăнса.
Кирек мĕн каласан та пурнар-ха
Турă янă çын пек çураçса.

* * *

Пĕр кайăк пăхса кайрĕ
Чӳречерен мана.
Тен, вăл темскер каларĕ,
Пĕлмерĕм калаçма.
Чĕл-чĕл те чĕлтĕр! терĕ,
Вылятрĕ куçĕпе.
Вăл, чăн та, вĕт пĕлтерчĕ,
Телей килет тесе.
Телейлĕн эп вĕçесшĕн
Çав кайăк пек паян.
Эп сан пата çитсессĕн,
Пăхатăп кантăкран.
Тен, эсĕ те халь ыйтăн:
Ку кайăк мĕн калать? –
Кайăк пекех пулсассăн,
Вара телей пулать.

* * *

Паян çырма урлă эп каçрăм.
Пит тарăн çырма Кĕтĕквар.
Çырма тĕпĕнче чарăнсан та
Хама эпĕ куртăм таçтан...
Эп мĕн çырма евĕр шырланнă,
Икке те пайланнă тахçан.
Темскер те тума авăрланнă,

Шутланă: аванччĕ тусан!
Ак, пĕр кĕнеке эп çырасшăн
Çырма евĕр пурнăç çинчен.
Мĕн-ма çурхи шыв путлантарчĕ
Çыран хĕрринчи çуртсене?
Ак, эпĕ çурт лартăп, шутлатăп,
Вăрман хĕрринчи ĕшнере.
Чечек те тем тĕрлĕ эп лартăп
Çав çуртăм тавра кунсерен...
Çапах та, çапах та эп иртрĕм
Çак тарăн çырма хĕррипе.
Çырма сассине те эп илтрĕм:
Лартатăп эп çурт ун çумне!

* * *

Ытарлă ут уйăхĕн кунĕ
Парсамччĕ мана ырлăхна!
Ирпе ман çине халĕ çурĕ
Ăш çумăр, телей пек юхса.
Çăвах эсĕ, çумăр, хĕвеллĕн.
Ăш çилĕ те тухтăр чупса!
Эп утăп вара çĕнелнĕн,
Пĕр пĕчĕк ача пек кулса!

* * *

Çакă тĕнчен чăн палли пур.
Тупса палăртсан эс ăна
Эс хăв та чăн турă пулăн
Ача пек ӳксен кăна.
Эс ӳкнĕ çĕртен ак çĕкленĕн
Çӳлтен те çӳле кайăк пек.
Вара ун чухне эс ĕненĕн
Тĕнчен чăн палли те пур!
Эс хăв çак тĕнчен кăвапиĕ,
Курмастăн-им эсĕ хăвна?

Çитет шыраса Çĕр çаврийĕн,
Эс çит-ха чупса хăв патна.
Чăнах та, итле, чун таппийĕ
Мĕн ĕмĕр санра çеç тапать.
Ун чух чăнласа чун паллийĕ
Тĕнчен чăн паллийĕ пулать.

* * *

Хулара та халь ялти пек
Утă çулăнать.
Çул хĕрри ярăмипех
Халь типсе пырать.
Ах, шăрши! Шăрши епле те –
Савăнать ман чун.
Хăвăртрах çава илес те
Вăшт! çуласчĕ те...
Хĕррипе утса пыратăп,
Эп васкап киле.
Тĕнчепе эпĕ вылятăп
Курăк шăршипе.

* * *

Пĕр тĕлте юр çунă пулĕ...
Шап-шурах асфальт.
Утă уйăхĕн чăн кунĕ
Пĕлĕтрен анать.
Пĕлĕтрен-и, йывăçран-и, –
Тăкăнать шур мамăк.
Ун çине пусса пырсан,
Хăвна туйăн çамрăк.
Ача пек, аса илсен,
Çывăрмалăх ту тӳшек!
Шурă мамăкран вăл тутлă.
Выртса çывăр вилнĕ пек...
Мамăк куртăм та йăлл! култăм,

Иртсе кайрăм топольран.
Эсĕ, тополь, канлĕ çывăр,
Шурă юр çăвать пулсан!

* * *

Паян яла каятăп
Эп пĕчĕк ача пек.
Эп кун çинчен шутлатăп,
Шутлап эрнипелех!
Билет илсе хуратăп,
Кăштах çыртма апат.
Çитсен апатланатăп –
Пулать вĕт майлăрах.
Ялта ман пур-ха кăтăш
Выртса канмалăх çурт.
Тен, çавăнпа та кăчăк
Пĕрмай туртать ку чух.
Эс кил-ха, кил-ха, тусăм,
Кĕтет сана хĕртсурт.
Килсе курсассăн, курăн,
Епле сан хăтлă çурт!
Епле сан чаплă пурнăç,
Епле чипер тĕнче.
Ярса парать ак турă
Сана хăй ырлăхне.

* * *

Пуç çапса утса эп тухрăм
Хамăр çĕршыва.
Хам валли куççуль эп тупрăм
Çак тавралăхра.
Мĕншĕн-ха чăваш таврашĕ
Курăнать аран?
Ĕлĕкрех вĕт ун пек марччĕ –
Пурччĕ пĕр çавра!

Халь вара ани-çаранĕ
Пуш-хир пек выртать.
Аякри хура вăрманĕ
Уя тапăнать.
Ман çĕршыв темле канать пуль,
Шухăшлап пĕрмай.
Хăй вăйне виçсе пăхать пуль
Çăлтăр ӳкнĕ май?
Каçхине уя эп тухрăм,
Çăлтăр пит нумай.
Эпĕр вĕт халь çăлтăр шутлă,
Эпĕр сахал мар!
Ма çĕклес мар çĕршыва ак
Çăлтăрсем таран?

* * *

Эп турă мĕнне пĕлменччĕ.
Шутланă, темле Христос...
Анчах çав Христос килместчĕ,
Памастчĕ мана вăл сас.
Пĕрре ăнсăртран-ши кисренчĕ
Тĕнче питĕ сивĕ чухне.
Ăса та манне иленчĕ
Пĕр Турă – çавра çеç тĕнче!
Ман туррăм темле пĕр çавралăх,
Нимрен уйрăлми пĕр тĕнче.
Вăл куçнă чухне вăй пухмалăх
Эс ху та пулатăн пĕрле.
Эх, пурнăç вара, çавăрать çех...
Чăн турă çавран курăнать,
Эс çав çаврана пăхăнан-тăк,
Пулатăн эс ху та çынах!

* * *

Кĕркунне килнĕ чух куртăм эпĕ

Çуркуннен пĕр хитре çутине.
Çавăн пек килнĕ пулĕ эпĕ
Тин çуралнă чухне хĕвелпе.
Сарă-симĕс те хĕрлĕ пин тĕслĕн
Ялкăшатчĕç кĕрхи чечексем.
Çавăн чух ман чуна темĕн хĕсрĕ,
Çуккă терĕç пулас малашсем.
Çуккă çав, чечек пек эп çунаймăп,
Çуркунне пек çуралмăп тепре.
Пурпĕрех çак çĕр çийĕн çунатлăн
Вĕçсе кайăп халь урăх çĕре...
Çакă пулĕ ман çуннă телейĕм
Кĕркунне килнĕ чух тепĕре...
Çуркунне тепĕр хут тек килеймĕ,
Кĕрес çук тепĕр хут çак кĕре...

* * *

Эпĕ питĕ хаваслăн
Çул çӳреп ир çинче.
Шуçăм шăппăн каласшăн:
Акă, санăн тĕнче!

Хĕвел тухрĕ те уйăм
Тӳпене перĕнет.
Эс пĕлетĕним, тусăм,
Ку мĕне пĕлтерет?

Эпĕ утрăм вăрахăн –
Кунçул тăршшĕ ман çул!
Çулăм пулчĕ пит вăрăм,
Хам та ӳсрĕм тем чуль.

* * *

Тăрри кайнă пĕлĕте,
Тымарĕ – хура çĕрте.

Пăхсан-пăхсан тĕлĕнен,
Нивушлĕ ку турă тен?
Чăн та, питĕ мăнă вăл,
Турă янă, тен, апостол,
Вăл каланă сăмах пек
Тем каласшăн çулçипе?
Пин çул ларнă ват юман
Пулчĕ маншăн чăн тăван.

* * *

Хура хурăнсем хăватлă.
Кĕрхи тумсене тăксанах
Çул хĕррине тухаççĕ,
Чунне çынсенне хăратаççĕ.
Çара вуллисем шăхăраççĕ,
Çӳлти пĕлĕте шăпăрлаççĕ,
Пĕрре çеç шăлса илеççĕ –
Шур юр çĕр çине тăкăнать.
Чĕре чĕтресе çеç тăрать,
Пире шартлама хăратать.
Ун сарă, хитре тумтирĕ
Хура çĕр çинче выртать.
Çав сарă тумтир пит тăванлăн
Çĕре сив хĕлтен упрать.

* * *

Çил-тăманлă, хурлăхлă
Кĕрхи кун паян.
Утма çул та шурлăхлă
Йĕпе çунăран.
Урам тăрăх утрăм-утрăм –
Юлчĕ пĕчĕк йĕр.
Шурă юрĕ çурĕ-çурĕ –
Хăть выртса халь йĕр!

* * *

Пĕр троллейбус каçхи хулара
Уçлăхри карап евĕр вĕçет.
Çумăр çурĕ пулать те вара
Хур чĕппи пек ларма тивет...
Кăшт ларма та кунта йĕпе...
Тăрринчен хура шыв-и тумлать?
Вараланчĕ пуль чаплă кĕпе?
Хитре хĕр те ларма, ак, тăхтать!
Эй. тăрса та пыма пулать-иç!
Пăхса пыр кантăкран сăнаса.
Йăлтăрать юмахри пек хула
Кантăк витĕр пачах урăхла...
Çакă пулăм ытла çăлтăрла
Чĕрене-ши хускатрĕ кăштах?
Пурăнма çумăрпа та пулать,
Хур чĕппи пек пулсан татах!

* * *

Ӳкерĕнчĕ пĕр ӳкерчĕк:
Лараççĕ хĕрсем пӳлĕмре.
Пĕри мана чей ĕçтерчĕ,
Тепри хурса пачĕ канфет.
Унччен те пулмарĕ – ĕç тупрĕç.
Кусем ахаль мар хĕрсем!
Килес пулать-мĕн Çĕн çул умĕн
Сăвă вулама хĕл çинчен.
Хĕлле тени халь те çуккă.
Манса тет-и юлнă таçта...
Хĕрсем сăмаха татса хучĕç.
Сăмах ман пĕтет çакăнпа.

* * *

Кĕрхи çул хĕрри асамлă...
Пĕр шĕшкĕ тĕми пур унта.
Çав шĕшкĕ вĕт, чăн та, хускалнă,
Анранă кĕрхи ăшăпа.
Çеçки, тен, ун çук-и, чăн та,
Пырса та пăхап çывăха...
Куратăп, каллех ярапаллăн
Вĕçесшĕн çав шĕшкĕ манпа.
Вĕçеп унпа эпĕ халь, чăн та,
Хĕп-хĕрлĕ çеçке евĕрех...
Çав тĕс пуль юна юхса кĕчĕ,
Çĕклерĕ чуна çӳлерех.
Тавах хĕрлĕ шĕшкĕ, утмалăх
Эс патăн мана вăй-хал.
Халь ĕнтĕ çакна çырмалăх
Тупатăп ăшра сăмах.

* * *

Кĕр иртрĕ пулĕ, çитрĕ хĕл.
Каçпа шăнтать... Утма та лайăх.
Тĕкĕр пекех кӳлленчĕксем
Мана кураççĕ кайăк майлă.
Пуш урамра кăшт кичемрех.
Сайран-хутран юр вĕçкелет.
Пĕр ушкăн кайăк вăрă евĕр
Çырла тăкса хăварĕ кĕçĕр...

* * *

Çăлтăрсем кăтартрĕç ĕç тĕлне.
Çăлтăр ĕçĕ, паллă, тĕттĕм каçсенче
Çутатса тăрасшăн çын çулне...
Утрăм-утрăм... Çухрăмсен шутне
Утнăçем çухатрăм. Çулĕ пит инçе!
Çăлтăр курăнатчĕ пит хитре...

Уйӑх тухса пӑхрӗ ир енне...
Сар хӗвел тухасшӑнччӗ – пулмарӗ,
Хӗвеле халь пӗлӗт хупӑрларӗ.

* * *

Хӗл те ларчӗ, те лармарӗ,
Ларма çеç, тен, шухӑшларӗ.
Пӗр-ик пӗрчӗ юр ӳксен,
Курӑнчӗ хӑй пит хитрен.
Йывӑççем те, ак, шап-шурӑ.
Йывӑçра пуль хӗл хӑвачӗ?
Пӗр хура тӑпра кӑна
Курӑнса выртать хуран...
Эп шӑнса вилеп пуль терӗм...
Шӑнса кайнӑ пӗр чиперӗ
Шур пӗркенчӗк тӑхӑнсан,
Туй пуçлатпӑр паянтан!

* * *

Таçтан ачалӑхран пӗр туйӑм
Вӗçсе хӑпарчӗ çӑлтӑрсем таран.
Часах Çӗн çул çитет те, курӑн,
Мӗнле хальтаранччен эсӗ айван.
Каллех кӗтетӗн, Хӗл Мучи килет те
Парне парать сана телейлӗ пек пулма.
Пӗр канихвет пулсан вара тивлет те
Çума пуçлать сан пуç çине тата...
Пӗр канихвет-и, тен, телей хӑй тӗллӗн
Сан ӑш-чике çурса кӗрет паян?
Килех, апла, Çӗн çул тӗлленнӗн,
Ача пулса кӗтсе илем сана тата.
Халь тин шӑла çыртса эп тӑмӑп урӑх.
Йӑлтӑрр! кулса яратӑп çӑлтӑр пек.
Халь тин каллех шур çырма тӑрӑх
Шуса иртетӗп йӗлтӗрпе ирпе...

Тăвайккисем тахçанхи пек яка-мĕн!
Мĕн чухлĕ ярăннă кунта ача чухне!
Мĕн-ма халь ярăнмаççĕ, эп пĕлместĕп.
Эп тухрăм-çке каллех çак йĕр çине!
Çапла пуль килчĕ Çĕнĕ çул саламĕ.
Эп тухрăм ярăнма çырма тĕпне.
Ай, шартарса куçа йăлтах пĕтерчĕ
Çĕн çул саламĕ юр çутипеле!

* * *

Аякра-аякра, тĕнчесем хĕрринчех
Пурăнать пуль таçта юр пĕрчи.
Çил тухсан çĕкленсе кĕрт çинче вĕçкелет.
Вĕçкелет те каллех пуль ӳкет...
Юр пĕрчийĕн хавасĕ çук мар пирĕнте.
Чун пĕрре çĕкленет, лăпланать тепринче.
Юр пĕрчи пек пуласшăн çунан чĕрене
Халь тин ĕнтĕ çунтармăн юрату вучĕпе.
Вырттăрах вăл кĕтсе çуркунне çутине...

# ВАТĂСЕМ УМĔНЧЕ

* * *

Паян пĕр хăватлă пулăм
Чуна пăлхатать ир кӳлĕм.
Каçпа пĕр чăваш çинчен
Пулать пĕр спктакль ирччен.
Тахçан пурăнса, тет, Иван.
Çырнă – Якку ачи ятлă.
Ăна, тăлăха, пĕр çын,
Суккăр Пахом, усранă.
Вăл суккăр пулсан та курнă
Ванюк ахальтен мар!
Ăна, тен, çуратнă туррăн?
Çав Туррăн юрри халăхра.

* * *

Епле аван чун еккипе утма.
Ăçта çитес тени хăйех çитет...
Пĕр касă эс пуçлан çырма,
Тепĕр касран кулас килет...
Епле эс кулăшла поэт иккен,
Çырма пĕлмесĕрех çырма пĕлен.
Ху çырнине ху çеç вулан пĕччен...
Тен, патриарх çырма вĕрентнĕ чух
Çапла кулса та илнĕ тепĕр чух.

* * *

Темле туятăп эп хамра хаваслăх.
Эп пур, çук мар сана пула, аттем!
Халь пĕр манра пуль палăрать тăванлăх,
Тытса пырсан çак тĕнчене пĕччен.
Пĕччен те мар пуль. Авалтан пуçланнă

Çак йĕр аталанма паян кунччен.
Ача çуралмасран çын хавасланнă,
Йăх тăсăлать-ха тенĕ ĕмĕрччен.
Ак иртрĕç ĕмĕрсем... Мĕскер-ха юлнă?
Пĕр йĕрсĕр пĕтрĕ аттесен тĕнчи!
Пĕр йĕрсĕр-ши вара? Вĕсем вĕт хывнă
Пирĕн çула çак вăхăта çити.
Апла, вĕсем, çук çухалман, пĕтмен-тĕр.
Эпир пăхатпăр аттесем пекех.
Вĕсен чăн пурлăхĕ ачасенче-тĕр,
Вĕсем савăнтараççĕ халь пире.

* * *

Турăсем çĕр çинче нумай.
Пуç çапаççĕ çамка шăтиччен...
Чăвашли вара пĕртте пулман
Пĕр ача, тăлăхскер, киличчен.
Мĕн çĕкленĕ ăна усăлăха?
Çĕр-анне пулинех... Майĕпен
Вĕренсе вăл тухать чăн çына.
Пăрахмасть çавăнтах халăхне!
Ас илет ăна халăх каллех,
Ĕлĕкхи пек каллех çĕкленет.
Халĕ тин халăхсен хушшинче
Чăваш ячĕ те янн! илтĕнет.
Хăй вара, çав ача, халь ăçта?
Ватăлса вăл вилсе тахçанах...
Каяс умĕн вара каласа:
«Чăвашпа çак тĕнче çăлăнать!»
Ун халалĕ халь пирĕн асра,
Унăн юнĕ чупать халăхра.
Пĕр çын евĕр тухатпăр утса,
Ĕлĕкхи вăхăтран çăлăнса...
Турăсем çĕр çинче нумай.
Пĕри-çех-çке çăлайрĕ пире!

Ун пекки уҫлăхра тек пулман –
Ун пекки урăх ҫук чĕрере!

* * *

Эс халăхăм ман, чăмăрккаҫăм,
Салантăним халь ним мартан?
Пиншер ҫул хушши чăмăртантăн,
Халь тин сапалантăн пулать?
Тин ҫеҫ-и-ха эсĕ хăватлăн
Ҫӳреттĕн тĕнче кастарса.
Эс пулнă ҫĕрте халь те аслăн
Пурнаҫҫĕ ҫынсем савăнса.
Апла, эс хăварнă чăн вăрлăх,
Касса та ҫӳренĕ ҫĕрте.
Чăнах та, таҫта та пур хăтлăх.
Кунта ҫеҫ ҫук хăтлăх пĕртте!
Тĕнче каснă чух тем ҫухатнă,
Темскер тухса ӳкнĕ санран.
Паян та, ак, питĕ асаплăн
Сывлатăн аран-аран...
Тăванăм, эс халь кустăрмаҫăн
Тепре кăлтăртат-ха татах.
Вара, тен, тепре ҫаврăнмалăх
Тухать пиртен вăй ҫавăнтах.
Ҫапла ҫураҫуллăн атя-ха,
Тепре сывланҫи пек тăвар.
Эп халь те пĕр пĕчĕк ача-ха.
Санпа пулнă чух – шĕл-кăвар!
Тен, ҫавăнпа, чăмăрккаҫăм,
Санпа эп тăрап юнашар...

* * *

Сан умра чуна уҫатăп
Сăвăсем ҫырса.
Санпала утса пыратăп

Урăх çĕршывра.
Çавăнпа хама куратăп
Сăвăра кăна!

* * *

Çĕр кăмăллă чăваш чĕлхийĕ
Епле шыв пек шăнкăртатать.
Шыв юххи пек илсе çитерчĕ
Пирĕн йăха тĕнче таран...
Халь ĕнтĕ унăн шăнкăравĕ
Тĕнче тăршши пуль илтĕнет.
Тепĕр чухне сасси çĕтсен те
Авăр пекех тарăнланать...
Вара куратăн, вăл çăтать
Мĕн пур йăх-яхлă çӳп-çапа.
Çапла вăл тасатать. Шăнкравлăн
Юхса каять тата мала.
Тепĕр чухне эпир юлхавлăн
Калатпăр, мĕн тума тесе.
Вырăс чĕлхи вĕт питĕ сиплĕ
Пулать ăс-тăншăн ку чухне!
Çапах, çапах, çапла пулсан та
Чĕлхен таппи вĕт чĕрере!
Çăлкуçĕ ун таçти аваллăх.
Юхать вăл халĕ ман юнра.
Çав юн пĕтсен, тен, калĕ халăх:
Эпир пĕлмен ку чĕлхене.
Эх, пĕлнĕ пулсанах тепре хут
Çĕкленнĕ пулĕччĕ тĕнче.
Анчах та çуннă çав кăварлăх
Тек пĕçертес те çук пире.
Ют чĕлхепе те киленмелĕх
Çиетпĕр çăкăр – юттине.
Эх, тур, пĕлместпĕр, çăкăр та
Чĕлхе çуратакан анне.

Эс çирĕн юттине пулсан
Чĕлхи те килчĕ юттипе.
Чăнах та, пăх-ха, тырă пулчĕ
Ху акнă-тунă анара.
Вара ăна вырса эс хутăн
Ху купаланă амбара.
Ăна эс авăртса пĕçертĕн,
Ларса та çирĕн пĕр йышпа.
Апла тусан епле-ха манăн
Тăван чĕлхе сипетлĕхне?
Чĕлхе вăл çĕр, чĕлхе вăл çăкăр.
Çĕр чĕлхипе çын сăмахлать.
Вăл çав чĕлхе, чăваш чĕлхийĕ
Шыв captured саслăн майĕпен юхать.
Ăна илтсен, ют çын та калĕ,
Чăваш çĕр майлă калаçать.
Эппин шыв сăслă çĕр хăвачĕ
Татах, татах тапса тăрать.
Чăваш юр-варĕ – чун апачĕ
Мĕн çинĕçем татах анать.
Сăмах каларăн та ĕçлерĕн,
Аттесенчен пилсем ыйтса.
Пиллерĕç пуль, мĕн чуль ĕçлерĕм,
Пĕлмерĕм пĕртте ывăнма.
Эп аврăм çĕр. Эп лартрăм çимĕç.
Халь тин кĕтеп тур парасса.
Турри парсан та пулĕ тулăх
Тырри-пулли те йăтăнса.
Тур памасан вара мĕн тăвăн?
Выртса вилетĕн çавăнтах.
Турри вăл çĕр. Пуçа çапса та
Чĕркуççине чĕркуçлентер...
Мĕн чухлĕ эс çĕрпе ĕçлетĕн,
Мĕн чухлĕ калаçан унпа,
Çавăн чухлех сана çитерĕ

Хăй çăкăрне вăл ӳлĕмрен.
Калаç, апла, калаç чăваш пек
Пурнăç паран тăпрапала.
Тăпра тесен, выртса эс пăх-ха
Хăвна туятăн чăвашла!
Эс ху та вĕт тăпра хăвачĕ,
Эс ху та пултăн тăпра пек...
Тен, çавăнпа, тăпра çисессĕн,
Эс чăваша та тухрăн вĕт!

* * *

Пĕлместĕп, мĕн ман çырмалла...
Поэт пекех, тен, çырмалла?
Çырма тĕпне кайса ӳксен те,
Çӳле пĕр кайăк пек вĕçсен те
Пĕр сăвă манăн çырмалла.
Çак çĕр çинчен, тăван çинчен,
Епле вăл аннă ту çинчен...
Çакă тĕнчен чăн пурнăçне
Хам сассăмпа палăртмалла...
Тен, çавăнпа эп ӳркенместĕп,
Тен, çавăнпа эп ӳкĕнместĕп...
Айăп ан тăвăр, тăвансем,
Пирĕн пĕр чун пур, уй-хирсем,
Çырма-çатра та вăрмансем!
Çавсем пĕр туйăмлă пулса
Пире çуратрĕç пулмалла. Апла,
Вĕсем çыраççĕ пулмалла!

* * *

Утă вăхчи каллех ак çитрĕ.
Курăк каласшăн: эпĕ сан!
Мĕн чухлĕ халĕ вăхăт иртрĕ,
Халь çулмасан кая юлан!
Эс, Хусанкай, мĕн-ма курмастăн

Курăк ахальлĕн пĕтнине?
Алла çава тытса çулмастăн,
Пăхса ларан ĕлĕкхилле.
Пĕлтĕрсенче эс, ас тăватни,
Йĕпе тăрсаччĕ çакă кун.
Кăçалсенче хăвна куратни,
Хĕвелленет пуль санăн чун.
Куçу сан, паллă, тимĕрленнĕ,
Чĕре те чуллă пулмалла.
Тахçан авал вĕсем кĕрленĕ,
Каланă: сăвă çырмалла!
Халь тин ларан эс, чуллă палăк.
Пуçу йĕс тимĕртен пулас.
Паянхи кун пĕр çут çанталăк
Санран ыйтать: утă çулас!
Çук, тухаймарăн ут çулма эс,
Пăхса çех лартăн палăкла.
Çапах сан чĕререн сасартăк
Сăвă янрарĕ пулмалла!

* * *

Çырах, çырах, çырса эс çырлахтар
Çил пек çĕкленнĕ кăмăлна.
Ун чух вара эс çавăрттар кăна
Çак тĕнчене хăвăн тавра.
Тĕнче те тăтăр сан пекрех. Тăхта,
Тăхта эс хурланса тăма!
Телей тени вăл пĕр самант кăна,
Хурланăвĕ килет тепĕртакран...
Халь савăн-ха çырса çак тĕнчене.
Сăвву пĕтсен мĕн тăвăн-ха?
Выртса йĕретĕн-и çак çĕр çине,
Е тепĕр хут çырса пăхан тата?

* * *

Хусанкай умĕнче эп тăратăп.
Эпĕ унăн ачи, ун турачĕ...
Ун патне çитсенех чĕрĕлетĕп,
Вăй парать пуль мана тавралăх?
Хусанкай умĕнче пуç таятăп,
Çĕр туртать пуль тесе эп малтан.
Çĕр те мар, унăн чапĕ хăватлăн
Пĕктерет ман пуçа майĕпен.
Эх, Петрович, эс Петĕр атте
Ху çумна пĕтĕмпех ил пире!
Кам пырса пуç таять сан ума,
Çавă тĕрĕс утать утăмпа.

* * *

Каллех эп килтĕм сан ума.
Тем пулчĕ чунăма. Кашни кунах
Пырса ларатăп сан пата çума.
Шутлатăп: пурнăçу сан сарлака...
Эс ĕмрипех: вилсен те пурăнатăн.
Килсе пăхать ача-пăча кунта
Тепĕр чухне. Шухăш килет пулсан,
Ку кам-ха, теççĕ. Пăх-ха, пăх!
Кăшт çаврăнаççĕ сан тавра ушкăнланса.
Пырса вулаççĕ: çуралнă... вилнĕ ку!
Çавна пула, тен, савăнаççĕ те...
Е çук вара, вилмен, шутлатăп сан пирки.
Эс, Хусанкай, пурнатăн халь пирте!
Çак çĕр çинче чăваш пулсан вара
Сăвву янрайĕ ир çинче тата!

* * *

Мăнкăмăллă ман Хусанкай!
Тĕнче салхулланчĕ самай.
Çапрĕ сăнна пĕр мĕлке.

Пĕлмен Хусанкай ун тĕсне!
Хĕвел тухасса кĕтем-ха,
Тен, уçăлĕ ку тĕнче?
Пĕччен эп поэт умĕнче...

* * *

Ăт, пурнăç тени, пĕлместĕн.
Килет те çапать ăнсăртран.
Ĕнер çеç пĕрле пек çӳреттĕн
Ална та парса кăмăлран.
Ĕнер çеç вĕт куçпа çеç кулаттăн
Туссем сан умра тăнă чух.
Ун чух эсĕ Туррăн курнаттăн,
Халь тин вара эсĕ – çук.
Пĕрех тепĕр чух çул утуçăн
Курнатăн пек манăн куçа.
Ку пурнăç пĕрех питĕ уççăн
Кăтартрĕ халь тин чăн сăнна.
Эс пулнă, эс пур, эсĕ пулăн
Çумри юлташсен асĕнче.
Тепре чăнласах эсĕ утăн
Çĕрпе пĕлĕтсем хушшинче!

* * *

Хăй ăсĕпе виçме пултарнă
Чăваш çĕрне Китай таран.
Хăй несĕлне çырса хăварнă:
«Эпир, тет, тухнă Китайран».
Çĕршер çулсем те пулĕ иртрĕç,
Эпир Китай пек пулнине
Халĕ тĕнче те ĕнтĕ пĕлчĕ –
Эпир Китай пуль чăннипе!
Пирĕн ăс-тăн хăй майлă пулчĕ,
Чĕре те тапрĕ хăйне май.
Хăш-пĕр сăмах Китайăн пулĕ –

Кăшт тăнласан тупан чылай.
Кĕвви-çемми, вара, итле-ха,
Тĕнче хăйех юрланă пек.
Эпир çав юрăпа килсе вĕт
Китай енчен Атăл çине.
Çакна туйма пире ăс пачĕ
Иакинф хăй, пирĕн атте.
Хăйĕн йĕрне çапса хăварчĕ
Тарăн çырмаллă Типнерте!

* * *

Пĕр хăрнă йывăç айĕнче
Хам халлĕн эп тăратăп.
Йĕри-тавра кĕрхи тĕнче –
Çавна эпĕ сăнатăп.

Çак çутă чаплă тĕнчере
Мана никам та кирлĕ мар!
Тĕнче тени ман чĕрере –
Ăна халь тивер мар...

Йĕри-тавра пĕр йывăç çеç.
Пĕр хăрăк йывăç пур.
Ăна тытса пăхсассăн кĕç
Хăрса каятăн пуль?

Çак çутă чаплă тĕнчере
Мана никам та кирлĕ мар!
Тĕнче ман хамăн чĕрере –
Ăна халь тивер мар!

Хăратăп эп çак тĕнчерен.
Пĕрех пĕтме памастăп.
Çак хăрăк йывăç çумĕнче
Урăх тĕнче куратăп.

Çак çутă чаплă тĕнчере
Мана никам та кирлĕ мар!
Тĕнче ман хамăн чĕрере –
Ăна халь тивер мар!

* * *

Пит тарăнран пĕр куç пăхать.
Таçтан, пит аякран...
Эсĕ, чăваш, халь миçĕре?
Пиншер çулсем умра...

Пиншер çулсем иртсе пыраççĕ,
Ял-хуласем йăлт улшăнаççĕ.
Çынсем те, халăх та халь урăх.
Епле эс иртрĕн ку çул тăрăх?

Тĕлĕнмелле те – ним те мар.
Чăваш пĕрре те урăх мар.
Тĕнче пит хытă улшăнсан та
Чăваш хăйне, çук, пăрахман-ха!

Ĕлĕкренпех çаплаччĕ вăл.
Хăйне пĕр май... Хăй пĕр патша!
Ютсем килсе çапсассăн та
Хăйне упраччĕ ним те мар!

Епле, апла? Нумай çын пĕтнĕ
Çак çапăçуллă хирсенче...
Чир-чĕр те пĕртте шеллемен...
Чăваш вилли, тет, тĕнчипе!

Çапла пулсан та çав çынсем
Вилмен пекех... Вĕсем чунра
Халь тин пурнаççĕ пулăшса.

Çав курăнать ман куçăма...

Çапла хуравлă пулчĕ ватă,
Хăй тарăн куçлă, хуп-хура...
Пăхать таçтан пит аякран,
Пире парать вăй-хал ялан!

* * *

Чăн чăваш умĕнче пире намăс.
Вăл шутлать вĕт пире, кĕтет.
Мĕн-ха эсĕр тума пултартăр...
Эп кĕтни, тен, чăнах та килет?
Эп шутланăччĕ... Пулĕ пит чаплă
Çут малашлăхĕ чăн чăвашсен.
Ах, анчах халь пурне те паллă,
Чăваш юлчĕ пулас пĕччен...
Тен, пĕчченлĕх аван та тĕнчешĕн –
Эс ху тĕллĕн пĕччен пурăнан...
Пурпĕрех вĕт çумри тăвансемшĕн
Чуну сан ыратать кунсерен...
Ун пекки эсĕ пурччĕ тахçан!
Халĕ кам-ши чунне кăтартать?
Ху чунна кăтартсан ку тĕнче чунланать!
Çак тĕнче те вара чашлатать!
Чăн чăваш умĕнче питĕ намăс.
Чăвашра эп пĕр ĕç те туман.
Тĕнче тăрăх çак чăнлăх янратăр –
Ĕç тусан тĕнче пулĕ чăваш!

* * *

Хĕвел те çук, чечек те çук
Сан умăнта паян.
Кĕрхи кунсем вăй илнĕ чух
Çуралнă эс аран.
Ачаранпах эс, чирлĕскер,

Курман та пулĕ кун.
Çак тĕнчере тата мĕскер
Шырарăн... вилнĕ чух?
Çăлма тесе шутларăн пуль
Христос пекех пулса...
Анчах та халăхĕ çĕр хут
Сана, тен, ылханса?
Ылханнă пулĕ çĕн куна
Хăйне хыт чĕннĕрен.
Мĕн-ма вара вырăсланма
Тивет халĕ тĕпрен?
Чăваш тени те кирлĕ мар...
Чăваш пулма пит хĕн!
Тĕнче пекрех авăрланар,
Вара телей те çитĕ...
Анчах та çын хăйне пĕлет,
Пурне те ирттерет.
Пĕлĕт çинчен вĕçсе килет,
Пурне те пĕлтерет:
«Эс пулнă сăвăç çын кăна.
Чăваш пекех пуласшăнччĕ.
Анчах та вăхăтсем сана
Çынран йăлтах кăларнăччĕ.
Тен, çавăншăн пĕтерчĕç те...
Чăваш пек пулаймарăн.
Вырăс туса çитерчĕç те
Хăвна тек тупаймарăн.
Эсир, тен, тупăр хăвăра.
Чăваш пулсах, тен, вилĕр?
Тискер айванлă тапхăрта
Пĕрле пулма та килĕр!».

* * *

Çултталăк иртрĕ.
Мĕн тăвас тен?

Каçар, тăванăм,
Ман чĕре
Саннипеле пĕрле сикетчĕ
Чăваш шăпишĕн шикленсе.
Халь ĕнтĕ вăхăт
Хăвăрт иртрĕ.
Сана манса кайман эпир...
Санпа пĕрле тĕнче юрлатчĕ,
Чăвашăн арĕ пур тесе...
Юрру, чăнах та, халь те пур-ха...
Анчах ху çук,
Килместĕн тек.
Çак тĕнчене тепре килтернĕн
Сăвă çырса парасччĕ хăть!
Эс ас тăватни,
Эс юрларăн
Пĕрремĕш юр çинчен тахçан.
Çав шурă юр паян пуçларĕ
Çав юрă пек янăрама...
Эх, чăмăрккаçăм, шурă юрăм,
Эс чĕренех тивертрĕн-çке!
Шап-шурă юр çуса хăварчĕ
Эс кайнă шурă кун çине...

* * *

Тĕлĕнмелле пĕр пулăм пулчĕ...
Эп пултăм Чĕмпĕр хулинче!
Авалхи пек атьсем те пурччĕ,
Калаçрăм эпĕ вĕсемпе.
Атьсем пекех эп тĕлĕнетĕп:
Тăрать чăвашăн шкулĕ шеп.
Ун стенисем те ишĕлмен-мĕн...
Шалти çап-çутă пӳлĕмсем те
Ĕлĕкхи пек хитре халь тин!
Чăвашсемпе курса калаçрăм,

Пуплерĕм çак тĕнче çинчен.
Каçса кайсах мана итлерĕç
Чăваш шкулне манманнисем!
Вĕсемпеле пĕрле те пурччĕ,
Сисетĕп, чăн вĕрентекен!
Мăн сухалне шăлса илет те
«Дак, эдак!» тет пек, килĕшсен.
Эп патриарх пекех шутларăм,
Каларăм хамăн пурнăçа.
Çак шкул пĕтсен чăваш пĕтес пек
Туйса тăрап çавăнтанпа!

* * *

Чĕмпĕре килсен эп чĕмпĕрлентĕм.
Чăнкăртатрĕç тенкĕсем таçта...
Хĕрсене те куртăм Нарспи евĕр –
Каччисем те пулчĕç Сетнер пек!
Хам та эпĕ Кĕçтенттин пек мар-ши?
Йӳле ятăм хамăн пиншака!
Савăнса пăхса утса пыратăп –
Иксĕлмен-ха Чĕмпĕр чăвашпа!
Чăваш хĕрĕ тĕнчере хăй пулăм,
Ĕлĕкхи пек чунлăскер, таса...
Эс унпа пулсан, чăнах та, урăх
Шутласа кăларăн пурнăçа...
Чĕмпĕре килсессĕн чĕмпĕрлентĕм.
Чăнкăр–чăнкăр терĕç тенкĕсем...
Çав саспа тĕнче халь чĕмпĕрленчĕ,
Сас памаççĕ «çуккă!» тенисем.

* * *

Çыр-ха, çыр! Эс çырма пултарăн
Çак тĕнче çинчен мĕн те пулин.
Тĕнчене те кăштах кустарăн
Çырса пынă чухне хăвăн пек...

Сан аллу пуль йӗрлет кайӑк майлӑ
Тин çеç çунӑ шур юр çиййӗпе...
Йӗр туса каласа эсӗ кайрӑн,
Кам каять пуль халь тин çав йӗрпе?
Халӗ тин никамах та каяймӗ,
Мӗн çыран – çухалать ир çинче.
Пурпӗрех пӗр çав кайӑк хӑварӗ
Хӑй йӗрне хут пекех чун çине.

* * *

Хӑй вырӑнне шыранӑ халӑх
Пырса тухсан çырма пуçне
Пуçа çапсах кӗлӗ каланӑ:
«Çӗр кӑвапи вӑл - çак тӗлте!».
Мӗн-ма тесе ыйтсан, пӗлетӗр,
Тахçан-тахçан, пин çул ытла
Эпир, тет, пурӑннӑ пӗр вӗççӗр
Месопотами патӗнче...
Унта эпир шывсем юхтарнӑ,
Тек пурӑннӑ тырӑ акса...
Кайран вара пире тустарнӑ,
Эпир килсе çак вырӑна...
Ӗлӗкхи пек вара хӑватлӑн
Каллех юхтарнӑ çав шыва.
Икӗ çырма пуçне тухсассӑн,
Каллех пуçланӑ пурӑнма.

* * *

Туятӑп, пур пек пурнӑç сӗмӗ
Ӗмсе илейнӗ сывлӑшра.
Çав сывлӑшпах тепре килтерӗп
Çухалнӑ çулӑмлӑ чуна!
Ура тапсан та пурнӑç пур пек.
Тен, такӑнса ӳксен кӑштах?
Çак утӑм сӗмлӗхне туян та

Пуянланан пек çавăнтах!
Е, ак, тата! Пĕр шухăш кĕчĕ,
Чăн юрату пек кисретсе.
Çак пĕлĕтĕн шап-шурă сĕчĕ
Халь тăкăнать шур юр пулса.
Çак сĕтлĕ уçлăхра тăрасчĕ
Сана валли телей суса.
Сана та пĕлĕт пек курасчĕ.
Тен, эсĕ шурă хĕл пулса?
Шăвать юр кунĕ пĕр хавассăр
Шур юр çусан кăна хăш чух.
Хăвна туйса илетĕн сассăр,
Юр çунă пек ўкен татах.
Апла, пĕр сассăр пурăнасчĕ,
Пĕр сассăр юр пек лап! ўкес.
Çĕре ўксен те курăнасчĕ
Шур юр пекрех, шур юр пекрех...

* * *

Нарспишĕн эпир хурланатпăр пулать-и,
Шеллетпĕр ăна, мĕскĕне, пур чунтан.
Мĕн-ма тесенех, ку паллă, эпир те
Нарспи пек вилетпĕр пулас паянтан.
Çапах та Нарспи пек пулсассăн, ара,
Вилессĕм килмест вĕт никамăн та халь...
Тен, çавăнпа та сăнарĕ тавра
Каллех пуçланать тавлашу халăхра.
Тăхта Нарспине мухтама е вăрçма...
Пире юрамасть – Нарспи вăл шăпа!
Унтан эс иртеймĕн пит ăслă пулсан та,
Нарспи пек пулаймăн тек нихăçан та!
Çапах та эсир çав хĕрпе тĕл пулсассăн,
Кăштах та пулин пулатăр чăваш...
Хăвна эс куратăн унпа юнашаррăн.
Апла, эсĕ ху та пĕтетĕн часах!

Эх, Турă, ку пулчĕ чăнах та çăтмах,
Нарспи пекех пĕтрĕ сар хĕр савăнсах.

* * *

Тĕнче пĕтмен-ха, эп шутлатăп,
Çак йывăç пек ӳсес тесе...
Темле пĕтсен те пурăнатăп
Тепре килеслĕн çак тĕле...
Çак йывăç пек пур кунĕ те,
Кăштах аса илсен хĕле
Эп çулçă пек чĕлхе кăларăп
Çак вилĕме те витлесе!
Пĕтен, тесе, эс, хĕл шутланă
Шăнтса пăрахнă чух пĕрре.
Мĕн систерсе йывăç шавларĕ –
Вăл уçрĕ пулĕ çăварне?
Сивĕ хĕле вĕт евитлерĕ
Кăшт пĕтнĕ хăйĕн пĕвĕпе...
Çу çитсенех, вăл шухăшларĕ,
Суран сипленĕ-ха, тесе.
Çук, йăлт пĕтмен-ха
Шăннă пĕвĕм...
Ăшă килсен, каллех татах,
Каллех ĕмĕтленме пуçларăм,
Пурнатăп-ха, апла, тепре!

* * *

Пĕччен çур уйăх тӳпере.
Тепĕр çурри ăçта-ши унăн?
Кив уйăха мĕн... каçсерен...
Çисе яман-ши, тетĕп, вупăр?

Эп пит хăратăп, юр илсе
Çӳле сапса пăхатăп вăрттăн.
Ывăтнăçем ман алсише

Хывса илетчĕ вупăр. Хăвăрт

Каларăм эп пĕр-ик сăмах.
Тулли çут уйăх пултăр, терĕм.
Мĕнле каларăм, çавăнтах
Çурма çут уйăх хитреленчĕ.

Куçне хĕссе пăхса пĕрре,
Хĕр пек тепре хупса та илчĕ.
Халь ĕнтĕ, чăн та, пит хитрен
Çут тӳпене çут уйăх килчĕ..

* * *

Эп тĕлĕнетĕп тĕнчерен...
Мĕн панине йăлтах илет вăл.
Мĕн чухлĕ пурăнтăм, çавна
Часах туртса илет пĕр сассăр...
Нивушлĕ пĕтĕп эп, шутлатăп,
Юлашкинчен сывланă чух.
Çак тĕнчене курса калатăп:
Эп тек пĕтместĕп пурпĕрех!
Пĕтет-и, тейĕр, тин çуралнă
Ача сасси çак тĕнчере?
Мĕн чухлĕ пуль эпир çӳренĕ
Çак тĕнчене касса тата!
Тен, çавăнпа çак чаплă пурнăç
Тем пек пĕтсен те пĕтес çук.
Çук, мĕн пани юлать пĕр вĕççĕр
Эпир ăна уянă чух!

* * *

Инçет патне çитме шутларăм,
Утса тухатăп-ши тесе,
Ача пекех эп таплаттартăм,
Пĕлмерĕм çав инçет мĕнне.

Халь ёнтĕ пурăнăç та иртрĕ.
Пĕрех утатăп инçете!
Инçет ăçта эс, мĕншĕн пĕтрĕ,
Çул утнăçем, хăват пирте?
Вилес чухне, чăнах та, çитрĕ
Мĕн ачаран ĕмĕтленни.
Ман куçăма чаршавăм витрĕ,
Кăвак инçет тахçан пулни.

* * *

Хулари çăлтăрсем шупка.
Тен, нумайăшĕ сӳннĕ те пулĕ?
Çавăн пек пулĕ пирĕн шăпа?
Сӳннĕ пĕр шурлăха ӳкрĕ...

Халĕ çуккă пулать пуç çинче пирĕн çăлтăр.
Кам сӳнтерчĕ ăна, Турă çутнă çутта?
Пиншер çул пулĕ утнă ман халăхăн çулĕ
Халĕ тин тĕтре евĕр каçран çухалать...

Тӳпери çăлтăрсем вырăнне ман умра
Çын хăй тунă хунар çуткалать.
Ку хунар ман çула çутатать çăлтăрла.
Ах, анчах çавăнтах путарать.

Ах, çĕклесчĕ пуçа çăлтăра çитиччен.
Хура каç тепĕр хут çăлтăрлантăр!
Çут хула тăршшипе çул утса тухиччен
Тӳпери манăн çăлтăр ан антăр!

* * *

Çĕнĕ çул çывхарса киличчен
Эп шутлатăп хам пурнăç çинчен.
Мĕн эп тунă вара çак куна çитиччен,
Мĕн çухатнă пулать çул çинче?

Чылай ĕç тунă пек туйăнать тепĕр чух.
Пӳрт тăвап майĕпен кашни çул...
Кĕнеке те кăлартăм пулас вăй хурса...
Çухăрса та ярас пек тăрап тарăхса...
Аптрамастпăр, апла, ахальтен пурăнман.
Мĕн тăвас тенине эпир тунă!
Пĕр хĕрарăм тесен, вăл тăрать çутатса.
Ман патне вăл пыма кăмăл турĕ.
Çĕнĕ çул умĕнче çавăнпа халĕ çутă.
Тем те куртăм пулать иртнĕ çул хушшинче.
Пуçран çапнă пулсан тепĕр хут та çĕкленĕ,
Тепĕр çул мĕн пулать-ха, шутлатăп тата...

* * *

Мĕн куртăм пулать тĕнче витĕр...
Тĕнче халĕ кантăк пекех.
Тĕнчен леш енчен чупса килтĕр
Тепре манăн вилĕмсĕр чун...
Эп вилнĕ пулсан та куратăп –
Кил-йыш ман чипер пурăнать.
Сире тепĕр чух хыпарлатăп,
Ярап тĕнче витĕр чуна...
Эсир, тен, ăна пĕр пĕлмесĕр,
Тапса та яратăр кутран.
Пĕрех эп çавна сисмесĕр
Чĕнетĕп сире чунран.
Эсир пĕр сăмах та ан калăр,
Персе тăрăр чăн илтмĕше.
Чуна упраса та хăварнăн
Пуплетпĕр вара иптешле.
Эй, турă, чăнах та пур пулĕ...
Куратăп хама леш енчен.
Çырап пек эп сăвă. Пĕтеп пуль,
Вĕт сăвăçăн чунĕ черчен...
Чунне те пĕлмерĕç пулас.

Унтан туй туса та таптарӗҫ.
Эп пултӑм пулас пӗр турпас.
Кайран, тен, пытарӗҫ, пӗлместӗп...
Ку пурнӑҫ пуҫра урӑх ҫук.
Пӗрех никама та вӑрҫмастӑп
Тӗнче витӗр пӑхнӑ чух.

## КĔСКЕ ШУХĂШСЕМ

* * *

Çуркунне ахаль мар пуль йывăр.
Йăтса килчĕ вăл хĕл сиввине.
Йăтса килчĕ те лăштăрр! пăрахрĕ
Хĕл тултарнă шап-шур кĕрт çине.

* * *

Çул çинче яка-яка...
Шуçтарать çул аякка!
Çавăнпа чунра аван –
Пĕр ӳксен... ванса каян...

* * *

Кун иртет-иртет,
Кăмăла килет.
Кун иртсен, тет, мĕн юлать?
Кăна кун хăй çеç пĕлет.

* * *

Шăнкăр-шăнкăр юхать çурхи шыв,
Çавăн пек сас парать шурă юр.

* * *

Тĕнче кĕтретлĕ. Вăй кĕрет.
Пуçне тайса ăш çил вĕрет.
Çăва кĕретпĕр пулинех...
Кĕтретлĕ пек юр кĕрчĕсем:
Юлашкисем çеç çырмара,
Шыв юхтараççĕ пĕтнĕçем.
Пул шыв пек эс таса та çутă,

Пуҫа тайса эс ут ҫил пек.
Хӗвел пекех кӗтретлӗ ҫу та
Вара килет пуль папка пек.

* * *

Шăтăк-путăк ҫул ҫинче –
Кам хăварнă вӗсене?

* * *

Хырать, хырать, хырать карташҫă
Такам хăварнă пылчăка.
Пылчăк вара – ӗмӗрлӗхе.

* * *

Йывăҫ ҫын евӗр юплӗ –
Пур енлӗхӗ те сиплӗ!

* * *

Сар ҫулҫă мӗншӗн хитрине
Никам та халь пӗлмест.
Пӗр хӗвел ҫеҫ – анчах пытаннă.

* * *

Паталлă хурăн пурпӗр шурă.
Хура пата пуль шуратать.

* * *

Пӗлӗтелле тӗлленӗ хулă
Шырать ҫил майӗн ҫут апат.

* * *

Юман шăршиллӗ ҫӗр.
Кӗр килсе ҫитрӗ-тӗр.
Сар ҫулҫă ҫӗрӗшет –

Шăрши ăша кĕрет.

* * *

Хура вăрман тĕлĕрет.
Юлашкийĕн курăнать
Хĕрлĕех пилеш.

* * *

Тен, юлашки ман кунăмра
Тĕнче килет сан куллупа.

* * *

Çунать, çунать кĕрхи тĕнче
Юлашки хут курнаслăн.
Тĕнче кайсан юлать ман чун,
Татах та пурăнаслăн...

* * *

Тарăху, мĕкĕлтетӳ –
Акă мĕн вăл çĕнетӳ!

* * *

Пĕр пилеш, палан...
Юнашар тата
Пĕр курак – уткалать унта.

* * *

Хĕвел ӳкнĕ пекех
Пихтăсен йĕпписем çĕр çинче
Çĕкленсе килекен шурăмпуç çутинче.

* * *

Кĕлт-кĕлт!
Кĕлт сасăпах чĕтре
Кĕлтелле çак тĕнче пекрех

Ху çыхă пул.

* * *

Ăмăр çурĕ мар-и?
Ăмăр кăмăл пур.
Ăмăрткайăк евĕр
Çунат сарса хур.

* * *

Каç пулса килчĕ.
Тĕттĕмленчĕ.
Хупрĕ куçне тĕнче.

* * *

Çутă пĕрчĕ тухса ӳкрĕ
Çакă çутă çул çине.
Çакă пултăр тĕнче чӳкĕ!
Эпĕ тухрăм чун тĕлне.

* * *

Хĕвел тухать. Тухать асаплăн...
Сăвă пекех вăл ырăлать.
Пĕр ун çине пăхса тăрсассăн,
Пуранна пек те туйăнать...
Пăхсам, апла, хĕвел хавассăн,
Тухсам инкеклĕ пуç çине!
Сăвва, кăштах çырса пăхсассăн,
Хĕвеллĕ пулĕ пурнăçу!

* * *

Çăлтăр ӳкрĕ тӳперен
Пĕр йывăç çинех!
Ӳсрĕ йывăç çĕнĕрен
Çăлтăрлă пекех.
Халĕ унăн йĕпписем

Пěртте курăнмаççě.
Йěпписем те тěрлěрен
Çутăпа çунаççě.

* * *

Çěнě йěр туса эп пăхрăм
Кивě сукмакпа.
Çавăнтах вăл такăнтарчě
Кивě вырăнтах!

* * *

Пěр кайăк пит вăрттăн
Кěлт! пăхрě те тарчě.
Палли те çук тейěн...
Анчах та хăварчě хăй вěçевне.

* * *

Хěллехи кун урлă кил-ха
Çěнě çул тума.
Çěрлехи вăй илнě туйăм
Кирлě пурăнма.
Кунě-каçě – пурте хутăш.
Мěн çěнни, кивви...
Хěллехи кун урлă кил-ха
Çěнě кун тума!

## КАРТАШÇĂ

Пĕрмай пĕр вăхăтра карташçă
Тухса шăлать, шăлать сар çулçăна.
Çак тапхăра телей пек кăтартасчĕ –
Вара вăл юлĕ иртнĕ пурнăçра.
Çак чаплă тапхăрсем чылай пулсаччĕ:
Юрлатчĕç шăпчăксем, юхатчĕ шыв...
Çерçи кăна ман асăмра юлсаччĕ
Çур саслăн çулçăсем шавланă чух,
Сыв пул сăмахĕсем янрарĕç вăрттăн.
Пĕр карчăк çулçă шăлнă евĕр
Вăратрăм хам чуна кăштăртатса.
Апла, каллех сар çулçăсен те шавĕ
Чуна тивет сивпе пăчăртаса...

* * *

Каллех карташçă кăштăртатрĕ –
Çĕн шăпăр тунă пулинех!
Сар çулçăн пурпĕрех катрамĕ,
Çав шăлса кайнă çул çинчех.
Сар çулçăшăн эп хаваслантăм,
Сана хăварчĕç-и, тăван!
Ыттисем пек кайса выртмарăн
Хура навус пек пĕр купан...
Апла, кăшт çиç-ха çăлтăр евĕр...
Ытла та тĕксĕм-çке паян!
Çумăр килсе çапать те тепĕр
Эс ху та пĕлĕт пек пулан...
Çапах та пур-ха, кĕр паллийĕн
Сар çулçă çул çинче çунать.
Ун чух телей тепре килейнĕн
Татах, татах та туйăнать.

* * *

Каллех карташçă.
Çав çынах!
Пуçтарчĕ тепĕртакçă.
Хăварччĕ çулçă эс кăштах,
Чун илемне-çке кирлĕ.
Хура çĕрпе халь мĕн тăвас.
Хуран выртать вăл, мĕскĕн.
Сана та хывăнтарчĕç вĕт
Тĕнче курмалăх, йывăç...
Хăйне, тен, хĕрхенместчĕ вăл,
Çара çĕре хĕрхенчĕ.
Ун тумĕ пулнă чунĕ пек.
Халь тин мĕн курчĕ пулĕ...
Карташçă чунсăр çын пекех
Пăхса тăрать пĕр сассăр.
Умра пĕр йывăç. Пĕтĕмпех
Хăйне пама пек хатĕр...

* * *

Утать карташçă унăн-кунăн,
Кусать хуралнă çулçă пек.
Сив çил килсе çапать те хумлăн,
Йăлтах шăнать çак йывăç пек.
Хĕл ларчĕ пуль çав, питĕ сивĕ,
Йывăрланать халь пурăнма.
Пĕрех карташçă питĕ тимлĕ
Пуçлать çак хутлăхпа утма.
Халь хутлăх пулчĕ питĕ хăтлă.
Таса тĕнче тавралăхра!
Унпа утса инçе эп кайрăм –
Карташçă юлчĕ чунăмра!

* * *

Каллех карташçă шыв-шур урлă
Хывать хăйĕн çулне пĕрмай.
Ун кĕреçи машина пулĕ,
Кăтăртать юр хырнă май.
Юр çунă та сукмак пăрлаклăн
Çын утнăçем хытать кăштах.
Кам утнă пулнă йĕр те юлнă...
Сан мĕн юлать пурнăçунта?
Йĕр хăварса утса тухсан та
Карташçă хырĕ çав çула.

* * *

Каллех карташçă килчĕ мар-и?
Пăхса тухать хăй хутлăхне.
Унпа пĕрле утса тухар-и
Хитре те çутă çул çине?
Çав çул çинчен тахçан пуçтарнă
Кĕрхи тĕнчен çулçисене.
Халь тин çак хутлăх та кăтартрĕ
Шăнтса пăрахнă кăмăлне.

* * *

Каллех карташçă карчăк кĕрхи кунăн
Кăштăртатса çӳрет хăй çулĕпе.
Ун çулĕ пылчăк, шурлăх урлă
Нивушлĕ курăнмасть çӳл тӳпере?
Çӳлте унта хур-кайăк çулĕ пур-тăр,
Çӳлтен вĕçсе анаççĕ çутă çăлтăрсем.
Çĕрте вара хур куракансем те пур-тăр,
Мĕн-ма вĕсем вĕçмеççĕ кайăк пек?
Иртет карташçă майĕпен кун евĕр.
Килмест текех çак çул çавăрăнса.
Хур-кайăксем вĕçсе килсен, тен, тепĕр
Çак кун мĕлки тепре килет аса.

* * *

Юр çунă хыççăн шурă йĕр
Юлать шур юр çине.
Çавна карташçă курчĕ те
Мĕн çунине хырса пырать.
Эп те хăвартăм пĕчĕк йĕр.
Йĕр юлтăр, терĕм-çке!
Ача чухне юр çусанах
Эп йĕр тăваттăм картишпех...
Кайран, ӳссен те шухăшларăм:
Йĕр юлтăр терĕм тĕнчипех!
Пĕр-ик калав эп çыркаларăм,
Пĕр-икĕ сăвă юр çинчен...
Кайран вара карташçă килчĕ.
Хырса пăрахрĕ ман йĕре!
Никам та хыççăн тек килмерĕ
Ман йĕр çине пусса пыма...
Пĕрех, тепре çех сив хĕл килтĕр –
Хыватăп эпĕ хам йĕре!
Шур юр çине йĕр хăварсассăн,
Пурнатăп пек, тĕнче, тепре.

* * *

Ăçта, карташçă, манăн чунăм?
Вăл тасине курас килет...
Тен, çӳп-çаппа пĕрле пĕр хутăш
Мана та вăл шăлса илет?
Акă каллех çак шăплăхра
Асамлă кĕвĕ пуçланать.
Тен, калăн, кив пӳртри пĕр шăрчăк
Чĕррик-чĕррик! тутаркалать.
Карташçă, чунăм, эсĕ пурччĕ,
Пуçран шăлаттăн тепĕр чух...

Халь тин вара мĕн-ма килмерĕн
Çак картише пăртак шăлма?
Шăлса илсен, тĕнче илемлĕн
Тен, тепĕр хут килет кунта?
Кĕтеп сана, килсем, чĕтревлĕн
Ху аллупа пуçран шăлма.

## ТУПМАЛЛИ

### УМСĂМАХ ВЫРĂННЕ

Шăрçаланать халь пурнăç тексчĕ........................3

### ХĔРАРĂМ

Арăм ăрăмларĕ пурнăçа........................................4
Хитре тĕнче пĕр хĕр тавра..................................4
Паян хĕрсем тумланнă..........................................4
Пĕр хĕрача куç кĕски евĕрех...............................5
Çу çитрĕ панулми пиçмелĕх.................................5
Нивушлĕ вара чăваш хĕрĕ....................................6
Тепĕр чухне чăнах та пур-мĕн............................6
Ман юрату каллех чупса та çитрĕ.....................7
Хĕрупраç утать пит меллĕн.................................7
Чӳхенет çут кун çути............................................8
Виççĕн ларчĕç, сăмахларĕç.....................................8
Пĕр турă килчĕ çĕр çине.......................................8
Эп тупрăм мар-и чунăма......................................9
Çутатать тĕнчене хĕр илемĕ................................10
Хальхи вăхăтри Нарспи........................................10
Эп айăплă çав. Уйăп кайăк................................11
Каç пулса килет турпаслăн.................................11
Тулли мих пек тулли тĕнче.................................11
Хĕвел ӳкет те саланать........................................12
Каçхине эп кунта пулманччĕ..............................12
Тĕл пулу кĕтнĕçем шухăшлатăп..........................13
Хитрелĕх пур çав тĕнчере...................................13
Тĕнче сĕмĕ хăвăнра-мĕн......................................14
Çак пурăнăç çинчен шутларăм...........................14
Çул çинчи пĕр киоск..........................................15
Çу иртнĕçем çутă çухалчĕ.................................15

Ытла та стайлă хĕрупрацăм.............................16
Çĕр çинче чăнлăхсем нумай.............................16
Куç умне халĕ туррăн тухатăн.........................17
Çакăнса тăратăп эпĕ..........................................17
Эс мана куратăн-и, тĕнче?...............................18
Манса кайрăн пулĕ. Çумăр çуккă...................18
Пĕр хĕр пек çеç пуласчĕ ман..........................18
Тӳпери çăлтăрсем анаççĕ.................................19
Пĕр хĕр умĕнче эп тăратăп.............................19
Çак тĕнче мĕнне пĕлмесĕр................................20

## ÇУТ ÇАНТАЛĂК

Хĕле аса илетĕп.................................................21
Уй çине пăхса илчĕç иккĕн.............................22
Çĕр çинче тĕлĕнтермĕш нумай.......................24
Тумла сассипе вăранчĕ......................................25
Нарăс уйăхĕн вĕçĕ..............................................25
Тахçанах эпĕ çырманччĕ..................................25
Çутă çанталăкăм манăн......................................26
Çăва кĕретпĕр пулинех.......................................27
Куртăм-ха, куртăм... Хăва çеçкере....................27
Пĕрре çуркунне систерчĕ темскер....................27
Йăмра симĕсленчĕ, атьсем!...............................28
Çулçă татрăм, тытса пăхрăм............................28
Сывă-и, ешĕллĕ çуртăм.......................................29
Пĕр вăхăт çу уйăхĕ чаплă.................................29
Ем-ешĕл йывăç çырмара....................................30
Юман йăраланать аран-аран............................30
Хурама çеçки çинчен çырман эп......................31
Тӳпере темле йывăç пур...................................31
Ку сивĕ çумăр кĕрхи пек..................................31
Канăçлă пурнăçăм манăн..................................32
Курасси пулать-и тек.........................................32
Тăри сассиллĕ уй тăршши...............................33

Эп çыратăп пĕчĕк сăвă....................................33
Паян çăвать вĕт çумăр....................................33
Кашни чул таткин пур сĕмĕ..........................34
Тополь мамăкĕ вĕçет........................................34
Паянхи пек эпĕ ăслă.........................................35
Ванса пĕтнĕ, пĕтнĕ чечексем...........................35
Ут уйăхĕ пĕтнĕ пулас.......................................35
Тополĕн мамăкĕ пĕтрĕ......................................36
Хĕрлĕ-хĕрлĕ сăнлă...........................................36
Татма пуçланă çулçăллă...................................37
Йĕри-тавра çĕр тĕрлĕ паллă............................37
Çумăр çапса тухрĕ ман çула...........................38
Ăшă çумăр çуллахи пек..................................38
Ăмăрлă пĕр кăмăлсăр çанталăк......................38
Çурхи ем-ешĕл йывăççем..................................39
Хура-шур пĕлĕтсен пĕр хумĕ..........................39
Хăтлă хутлăх çакă чăрăш...............................39
Сип-сивĕ уçлăхра чăлтăртатать тĕнче............40
Шăлтăр-шалтăр! шатăртатрĕ............................41
Шутлаттарчĕ кĕрхи тĕнче...............................41

## АРÇЫН

Пĕр çын кăмăлне те пулин............................42
Юрлать пĕр арçын çуттăн.............................42
Çын кулса ларать аван...................................43
Сăвăç тени кирлĕ мар пуль...........................43
Эпир нимрен те хăрамастпăр.........................44
Чун ывăнса çитсессĕн......................................45
Шăвать темĕскер пĕр сисĕнкĕсĕр...................45
Пĕр юратусăр пурăнма май çук.....................46
Тĕнчере пит хăрушă паян..............................46
Кĕтме вĕрентĕм эп тинех................................47
Кĕтетĕп, кĕтетĕп, кĕтетĕп................................48
Икĕ пайран тăрать тĕнче...............................48

Çынпала пурӑнма пӗлеймерӗм........................48
Çакӑ тӗнчере çӗнни нумай.............................49
Çак тӗнче тупсӑмне эс тупаймӑн..................49
Пӗр кайӑк пӑхса кайрӗ..................................50
Паян çырма урлӑ эп каçрӑм..........................50
Ытарлӑ ут уйӑхӗн кунӗ...................................51
Çакӑ тӗнчен чӑн палли пур............................51
Хулара та халь ялти пек................................52
Пӗр тӗлте юр çунӑ пулӗ.................................52
Паян яла каятӑп..............................................53
Пуç çапса утса эп тухрӑм.............................53
Эп турӑ мӗнне пӗлменччӗ...............................54
Кӗркунне килнӗ чух куртӑм эпӗ....................54
Эпӗ питӗ хаваслӑн..........................................55
Тӑрри кайнӑ пӗлӗте.......................................55
Хура хурӑнсем хӑватлӑ..................................56
Çил-тӑманлӑ, хурлӑхлӑ..................................56
Пӗр троллейбус каçхи хулара........................57
Ӳкерӗнчӗ пӗр ӳкерчӗк.....................................57
Кӗрхи çул хӗрри асамлӑ................................58
Кӗр иртрӗ пулӗ, çитрӗ хӗл.............................58
Çӑлтӑрсем кӑтартрӗç ӗç тӗлне.......................58
Хӗл те ларчӗ, те лармарӗ...............................59
Таçтан ачалӑхран пӗр туйӑм..........................59
Аякра-аякра, тӗнчесем хӗрринчех...................60

ВАТӐСЕМ УМӖНЧЕ

Паян пӗр хӑватлӑ пулӑм................................61
Епле аван чун еккипе утма...........................61
Темле туятӑп эп хамра хаваслӑх..................61
Турӑсем çӗр çинче нумай..............................62
Эс халӑхӑм ман, чӑмӑрккаçӑм.......................63
Сан умра чуна уçатӑп..................................63
Çӗр кӑмӑллӑ чӑваш чӗлхиллӗ.......................64

Пĕлместĕп мĕн ман çырмалла.......................66
Утă вăхчи каллех ак çитрĕ..........................66
Çырах, çырах, çырса эс çырлахтар...............67
Хусанкай умĕнче эп тăратăп.........................68
Каллех эп килтĕм сан ума............................68
Мăнкăмăллă ман Хусанкай............................68
Ăт, пурнăç тени, пĕлместĕн...........................69
Хăй ăсĕпе виçме пултарнă.............................69
Пĕр хăрнă йывăç айĕнче................................70
Пит тарăнран пĕр куç пăхать.......................71
Чăн чăваш умĕнче пире намăс......................72
Хĕвел те çук, чечек те çук............................72
Çулталăк иртрĕ...............................................73
Тĕлĕнмелле пĕр пулăм пулчĕ.........................74
Чĕмпĕре килсен эп чĕмпĕрлентĕм..................75
Çыр-ха çыр! Эс çырма пултаран..................75
Хăй вырăнне шыранă халăх..........................76
Туятăп, пур пек пурнăç сĕмĕ........................76
Нарспишĕн эпир хурланатпăр пулать-и.........77
Тĕнче пĕтмен-ха, эп шутлатăп.......................78
Пĕччен çур уйăх тӳпере.................................78
Эп тĕлĕнетĕп тĕнчерен...................................79
Инçет патне çитме шутларăм.........................79
Хулари çăлтăрсем шупка................................80
Çĕнĕ çул çывхарса киличчен..........................80
Мĕн куртăм пулать тĕнче витĕр....................81

КĔСКЕ ШУХĂШСЕМ............................83-87

КАРТАШÇĂ..............................................88-92

**Желтов Михаил Павлович**

# Тĕнче умĕнче

# На миру

Стихи
на чувашском языке

Печать принтерная
Бумага принтерная
Тираж 10 экз.
Самиздат «Семья»